ÇЕРКЕЙ ЙАЛАВИН



# ТАРĂН ЙĂРАН

СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ
МУСКАВ ★ 1931

# ТАРӐН ЙӐРАН

## I.

Пасар саланнӑ. Хӑшпӗр ҫӗрте кӑна хапхасем умне лашасене кӑкарма йури тунӑ пӗҫӗк ункӑсенҫен ҫӗлпӗртен ҫыхса хунӑ лашасем, выҫӑ аптранипе, хуҫисене кӗтсе урисемпе пӑрланса хытнӑ йура ҫавса тӑраҫҫӗ. Каҫакасем, сыснасем пасар плошҫӑтне кӗтӗвӗпе сӑрса илнӗ те, лавсем ҫинҫен тӑкӑнса йулнӑ утӑ пайӑркисене, ҫӗрӗк улмасене, тата ытти тӗпренҫӗк апатсене пуҫтарса ҫӳреҫҫӗ.

Пивной ҫурҫӗ умӗнҫе пилӗк-ултӑ ҫуна тӑраҭ. Икӗ лаши урхамах пек тӑнӑ ҫӗрте кӗҫенсе ташласа тӑраҫҫӗ. Хуҫисем сӑра ӗҫме кӗнӗ, лашисем киле кайма васкаҫҫӗ. Пӗр вырӑнта тӑнипе сивӗ аптратса ҫитерӗнӗ вӗсене.

Хыҫлӑ, хура сӑрӑпа сӑрланӑ ҫуни ҫинҫе кивӗ тӑлӑп пӗркеннӗ те ҫамрӑк аҫа ахаль тӑриҫҫен пушӑ аврипе ӗне мӑйраки пек авса тунӑ, тӗрленӗ ҫуна пуҫне шаккаса лараҭ.

— Тӑп-тӑр ҫорт,—кӑшкӑркалаҭ вӑл вӑхӑтран вӑхӑта тӗк тӑра пӗлмен лашине,—хам та кӗтсе ывӑнтӑм пайан. Унтан пусмаллӑ, ҫӳлӗ, сӑрланӑ пӳрт ҫине пӑхса илет.

Хӗл кунӗ пит кӗске, иртни те сисӗнмест. Илле виҫтӑват уҫрештенине кайса килнӗ ҫӗре каҫ пулҫӗ. Хӗвел ҫурри аннӑ, хӗвел анӑҫ хӗп-хӗрлӗ. Ҫӗрлеҫҫен киле ҫитес тесе Илле хваттӗрне васкаса утаҭ.

Вӑл пивной тӗлне ҫитерехпе (ҫав ҫурт умӗнҫен иртсе каймалла унӑн) ахӑрашнӑ сасӑсем илтӗнме пуҫларӗҫ, унтан алӑк уҫӑлса кайрӗ те тӑваттӑн ыталашса пусма

тăрăх тайкаланкаласа ӳсӗр ҫынсем тухрӗҫ. Пӗри тухсанах йур ҫине тӗшӗрӗлсе анђӗ.

— Тăлăпна варлатăн, тăр! тăр! лăскаҭ ăна сарă кӗрӗк тăхăнни, вăл ытла нумай ӗҫмен курăнаҭ,—уринђен ӳкмен.

Пивной хуҫипе сарă кӗрӗкли ҫавăтса ҫуни ҫине кайса выртгарђӗҫ. Вăл, ӳсӗрскер, сысна пек, ҫуна тӗпне сарнă улăм ăшне пашлатса кӗрсе выртрӗ. Пусма ҫинђен тата иккӗн, хӗп-хӗрлӗскерсем, утса та анђӗҫ. Вӗсен камсем иккенне Илле инҫетренех палларӗ.

— Ав пирӗн тăшман—тăсса кăтартрӗ пуйан Хӗлип ун йенелле хăйпе пӗрле пивнойран тухнă ҫынна.—Ҫав пăтратаҭ пӗтӗм йала. Ей-ей комнист, сăра ӗҫессӳ килмести санăн,—хирӗҫесшӗн унпала пуйан Хӗлип.—Кил ӗҫтерем, санăн хăвăн кӗссу тӗпӗ йап-йака пулӗ, мӗн пур санăн? Хе-хе-хе. Хо-охо-хо—тайкаланса кулаҫҫӗ ӳсӗр кулаксем.

— Налук тӳленӗ ђухне укҫа ҫук тетӗнҫке—утнă май каласа хуђӗ Илле.—Хаљ ҫӗнӗрен пуйрăним?

— Кăҫан та пулсан кăтартăпха еп сана «налук»,—йунаса йулђӗ Илле иртсе кайсан пуйан Хӗлип.

Хӗвел аннă хыҫҫăн сивӗ ҫил тухрӗ, плошђăтри ҫӳпҫапсене шăлса пӗр ҫӗрелле пухаҭ. Тавраpи йалсенђен пасара килнӗ ђăвашсем ђаппанӗсемпе пӳркенсе ҫара ҫунисем ҫине лараҫҫӗ те, тилхеписене ҫавăркаласа йаталла ђуптараҫҫӗ.

— Пуштăран ҫырусем, хаҫатсем илсе тухрăм, пăх мӗн ђул хаҫат пайан—кăтартаҭ ăна райӗҫтăвком лавҫи Матви хирӗҫ пуштăран тухса.

— А-а-а. Епӗ те ҫавсене илсе тухас тесе килтӗм. Парха сумккăна кунта.

Иккӗшӗ те хваттерелле васкаса утрӗҫ. Матви пысăк йӗтӗн ҫӗлӗкпе пысăк ҫăматпа, вăрăм ђаппанпа Илле хыҫҫăн аран йăраланса пыраҭ.

— Ăçта кайма вăл тери васкатăн—çиленсе калаť ăна Матви—халђ васкамасан та хваттере çитрĕмĕр ĕнтĕ. Ĕçўсене хăвăртрах тума тăрăшмаллађђĕ, сана кунĕпе кĕтсе ывăнтăм.

— Пур çĕре те çитмелле пулђĕ Матви пиђђе, васкаса ĕç тухмасť вăл—тет Илле вăрăмăн йарса пусса.

— Епĕ те çавна калатăп.

Пиншаклă çĕлетнĕ ăшă кĕрĕкпе, вăрăм кунђаллă тĕпхунă çăматăпа Иллене утма çăмăл. Пĕр самант ђĕнмесĕр пыђĕç. Çил вăйлăланнă çемĕн вăйлăланаť. Хуралтсем çинђен йур вĕçтерме пуçларĕ.

— Епĕ хăварнă паккетсене çутă пайне леçсе патăни? тесе ыйтрĕ хыçĕнђен пыракан Матви йеннелле çавăрнса Илле.

— Ăна епĕ ирех кайса леçсе килтĕм.

Хыçалтан лашасемпе тĕпĕртеттерсе çитрĕç.

— Ей-ей, пăрăнăр—хытă сасăпа кăшкăрђĕ пĕри хыçалтан.

Вĕсем пĕр хĕрне пăрăнсанах икĕ çуна пăшлаттарса иртсе кайрĕç. Пурте киле васкаççĕ.

Çитсе хапха уççанах Матви лаши кĕçенсе йађĕ.

— Епĕ килнине таçтан сисет вара çак лаша—катăк шĕлне кăтартса кулкалаť Матви.—Ну епĕ пўрте кĕрсе тăмастăп. Пыр, ђаппанна тăхăнса тух, епĕ лашана çавăрса хурам—тесе утрĕ Матви лаши патнелле.

— Каçа йултăр, ыран ирпе каймалађђĕ—тет хваттир хуçи—тăман тухсан аташса кайăр.

— Ей, кунта та аташсен вара. Но-о-о кайрăмăр киле—ђуптарђĕ лашине Матви.

Хирте çурçĕр йенђен вĕрекен сивĕ çил, çулваррине йур хўсе тултарнипе, çунана шума йăвăр. Матвин кĕрен лашин сакăл урисем ђĕркуççи таран путаççĕ. Çуна тупанĕ умĕнђе йур купаланса пыраť. Матви хистенипе лаши çапах та, такăртарах çула тухсанах, ђупасшăн

термекленет. Вăл йуртса пынă май кутлăхĕ пĕр йенђеи тепĕр йеннелле сиккелесе пырат̆.

— Но-но ђуп хытăрах, хĕвел аниђђен киле çитес— çавăркалат̆ вăл пушшине.—Но-о!

Матви çурăмне вырăнĕ-вырăнĕпе йур шуратрĕ. Ларкăç çинђе, çуна тайăлнă май, мĕлке пек тайкалнса пырат̆.

Илле ашшĕнђен йулнă кивĕ ђапанне пусĕнђенех витĕннĕ те, пит тарăн шухăша кайнă. Çул çинђе шухăшлаттарат̆ вăл. Колхоссойусри ларăва аса илђĕ. Кунĕпе ларђĕç вĕсем унта. Епĕр вĕт ларусене хăвăрт туса ирттерме вĕренеймен-ха, пĕри пĕр сехет калаçат̆, тепри сехет те ытла калаçат̆. Каçпа çанталăк пăсăлассине вăл райкомра ларнă ђухнех сисрĕ. Картыш йенђи ђӳређерен пăхрĕ те, лупас çинђен йур вĕçнине курђĕ.

— Кĕçĕр каçпа тăман тухат̆—шухăшларĕ вăл ун ђухнех—анђах ĕçе пĕтермесĕр тухса килме çук.

Çил вăйланнăçемĕн вăйланат̆. Çулăн икĕ айккине лартса тухнă майаксем те, ăшăнас тесе пулас, сулланса лараççĕ.

— Тăман вăйланат̆. Ĕккей çанталăкĕ. Но-о! мĕн пусна пăркалатăн, шатун—сасă парат̆ Матви лашине тилхепепе турткаласа. Лаши Матви сассине илтсен ђупма тытăнат̆ те, тарăн çĕре кĕрсенех ђарăнат̆.

Ĕмен кассине çитерехпе куç курми тăман тухрĕ. Илле ђаппан çухине пăрса, çил йенне çавăрăнса пăхрĕ те, сивĕ çил çавăнтах унăн сывлăшне питĕрсе илђĕ. Кĕрпе пек хытă йур пĕрђисем куçа уçма памаççĕ. Илле тепĕр май çавăрнса ларђĕ.

— Питне ђĕпĕтети мĕн? Çапла вĕт вăл. Çапла кирлĕ сана—çиленет ăна Матви—сана пула каçа йултăмăр.

Илле те çиленсе çитрĕ. Хырăм выçнипе ахађ те кăмăлсăр, тата Матви вăрçса пырат̆.

— Супĕлтетсе ан пыр, çулна авантарах асту—кăларҫĕ вăл ҫаппан айĕнҫен хытă сасă.

— Епĕ халҫ те лашана хистетĕп.

Лаши пырсан-пырсан пуçне суллать. Урине ҫаркаласа ҫупнине кайри урисем çуна тупанне «шак-шак» перĕнеççĕ. Тăман çав тери вăйлăнаннипе инçетрен курăнса ларакан вăрман та курăнми пулҫĕ. Кас-кас çил ҫарăнсан çеç пĕр самантра курăнса кайать.

— Ну тухрĕ те çилĕ, астуха йепле урса кайрĕ çанталăкĕ.

Иллен ури шăнма пуçларĕ, тата çуна шăтăкĕнҫен Илле айакпĕрҫине çил вĕрет. Вăл пĕр ывăç утă илсе шăтăка питĕрҫĕ.

— Тăпру, сто-й! Йăнăш çулпа кайрăмăр пулас—хытă кăшкăрса йаҫĕ Матви—çил мана хăйаккăн вĕреҫҫĕ халĕ хыçран вĕрет, тесе каллĕ-маллĕ пăхкалать Матви.

Унăн куçхаршисем, сухалĕ пăспа шуралнă. Ҫаппан çухи çине пĕр вершук йур çыпçăннă.

— Вăт йавăл,—вăрçать вăл, те лашине, те çанталăкне. Лаши ҫарăнҫĕ те, пуçне сулласа тăрать. Йăвăр çулпа йур аштарса пынипе йĕп-йĕпе тар тухнă. Мăйĕ çинҫи тар пăс пулса кайнă, урисене йур хытса пĕтнĕ. Матви анса çул айккине пушăпа ҫышкаласа çӳрет.

— Пирĕн çул мар ку, Илле Макарҫҫă, аташрăмăр пулас, пĕтĕмпех аташрăмăр—çилпе сулланкаласа тăрать çул çинҫе Матви.

— Ан сӳпĕлтет тархасшăн. Ернере темиçе килетĕр çак çулпала, кунта та аташсан вара, тет Илле ним калама аптăраса.

— Тăман вăйлă, нимĕн те курăнмасть вĕт—тăскалать аллисене Матви Илле умĕнҫе. Лаша çула пĕлмелле те. Нуккă, çивккă пурккă сылтăмалла, турткалать вăл тилхепинҫен. Но-о килелле!

Лаши ăна итлет, вăл ăçта туртнă çанталла пăрăнать.

— Вăрман çулĕ пулас ку. Вăт никотнăй, пыракан çултан аташаĭ—тесе пушшипе çапрĕ лашине. Ларкăç çине сиксе ларђĕ те, ђуптарђĕ малалла. Çил сылтăмран вĕрме пуçларĕ. Çул ăçта иккенне нийепле те пĕлме çук, пур çĕрте те путаĭ. Лаша хӳри сулахай турта çинђе выртса пыраĭ.

— Тупрăни çула?—ыйтрĕ унтан Илле сасăсăр пырас мар тесе.

— Мур пĕлети, кайарха малалла, ăçта та пулсан пырса тухăпăр мушĕт.

Иллен ури çывăрса кайнă, хускатма та çук, анђах вăл çапах та пĕр, тăсаĭ, пĕр хутлаĭ сулахай урине. Куçа уçса пăхсассăнах йур пĕрђи пырса çапаĭ те, куçа йăмăхтараĭ.

— Çул пулмарĕ пулĕ ку, мурилешĕ—мăкăртатса пыраĭ ларкăç çинђе Матви—йур ытла тарăн. Ђăнахах та, йур тарăнланнăçемĕн тарăнланаĭ, йĕри тавра нимĕн те курăнмасĭ.

— Авантарах пăхкалаха есĕ, ниушлĕ çӳрекен çула маннă? тет Илле.

— Ех, таврăнсан лару тумалађђĕ.

— Ларуна пăрахха есĕ, çул тупма çук кунта. Иллен çилли тулса çитрĕ те, анђах никама та айăплама çук.

— Ђарха лашуна, хам анса пăхам.

— Тпру! Ну ан.

Илле çуна çинђен ансанах ури йур ăшне путса ларђĕ. Çывăрнă ури сăрлатса кайнипе вăл кăшт çеç йăванса кайађђĕ,—хаљ те çуна хыçĕнђен пырса тытрĕ.

— Çулпа пыратпăр ан хăра—терĕ вăл савăнăçлă сасăпа—çуна хыçĕнђе йур хытăрах, çул пулас вăл.

— Апла пулсан лар ђасрах, ђуптарăпăр.

Çил Иллене çултан пăрса йарасшăн. Илле çуна хыçĕнђен тытса пыраĭ.

— Çуран утса пырам-ха, ура шăнма пуçларĕ.

Ура шăнсан пĕтĕм çан-çурăм шăннине аван пĕлет Илле. Пĕр çур сехет кайсан, вăрман патне пырса перĕнђĕç. Пăхаççĕ—вăрмана çӳрекен çул.

— Виçĕ çухрăм çаврăнăç турăмăр—тет Матви пăрланнă сухалне сăтăркаласа—лархa хаљ аташмастпăр ĕнтĕ. Вăт çиле шан. Лаша çулпах пынă мĕн, епĕ ăна пăрса йăнăш çула кĕртсе йанă.

Илле ђылай утса пынипе урисем ăшăнђĕç. Ђаппан çухине тавăрса хуђĕ те, çуна çине пырса ларђĕ. Вăл ларса пынă вырăн хур йăви пек çап-çаврака.

Вăрманта çулĕ те сисĕнмест, йур çуни те палăрмасť. Пĕр сас-ђĕв те çук. Лапсăркка йăвăç тăррисем çеç пуçĕсене тайса, вĕсене каçхи хăнасене, кĕтсе илеççĕ.

— Кăш-каш кашлаť кассăн-кассăн çурçĕр йенђен вĕрекен çил. Вăрманта пĕр сас-ђĕв те çуккипе Иллен ђун именет. Пĕр кĕтесрен кам та пулсан тухса çапассăнах туйăнаť ăна. Ку вăрманăн вĕçĕ кăна вĕт-ха, тепĕр вĕçĕ район ђиккинђен иртет. Урлă касма та тăватă çухрăма йахăн каймалла. Иллен çумĕнђе револьвĕр çук, хăш ђухне хăйпе илсе çӳрекенђђĕ, пайан васканипе килне манса хăварнă.

— Кашкăр тухсан мĕн тăвас?

Шăннă аллисемпе кăссинђен пирус кăларђĕ те, тивертме шăрпăк шыраť. Шăрпăкĕ пиншак кĕссинђе.

Матви нимĕн те ђĕнмест, вăл ђĕнменнипе тата хăрушăрах.

— Ăйха карăним?

— Каккуй ăйха кайма! Ăш вĕçрĕ. Ђорт, таçта килсе кĕтĕмĕр, ку çулпа кам çӳрет халĕ, никам та çук. Пантитсем çапса пăрахĕç, тесе хăраса пыратăп.

— Çак кутсăр-пуççăр тăманта, çакăн пек çанталăкра кам çӳретĕр, тесе йăпатаť ăна Илле. Анђах хăй те шикленсе пыраť.

— Лере мĕскер вăл?

— Ăçта-а? Малалла тăсăлса пăхрĕ Матви—нимĕн те çукçке?

— Ну ҫуптар, ҫуптар лашуна, кунта çул славнăйах, йури каларăм епĕ, есĕ хăранине пĕлме çеç каларăм, ытла хăравăç иккен есĕ—тет Илле мĕн те пулсан калаçса ҫунне йăпатас тесе.

— Кунта килти мар Илле Маккарҫҫă.

Ҫăтлах пырса кĕҫĕç. Инçетре йăвăç ÿкни илтĕнҫĕ. Хăшпĕр турата пĕкĕ перĕнет те, пĕр купа йур çуна çине персе анаĭ. Пĕр ҫăмăркки Илле çухи айне кĕрсе кайнă. Илле васкаса кăларса пăрахрĕ те, ҫаппан çухине çавăра хупрĕ.

— Нумай мар ĕнтĕ, вăрмантан тухатпăр,—тепĕр май çавăрăнса ларҫĕ Матви.

Иллене ăйхă пуснă, куçхаршисем йăвăрланнă, ирĕксĕрех хупăнаççĕ. Анҫах сивĕ аллипе йăваласанах, ăйхи уçăлса кайрĕ.

Вăрмантан тухсанах, вĕсене сивĕ çил ыталаса илҫĕ—ҫаппан çухинҫен лăскаĭ.

— Кунта аптăрамастпăр ĕнтĕ,—тет Матви кĕсйинҫен ҫĕлĕм кăларса—тăвата çухрăмран хамăр йал, çырма таврашĕ çук, ним курăнмасан та çитетпĕр. Но-о «Çивккă пурккă»!

Лаши йерипен йуртма пуçларĕ. Çуна шунă май Илле пысăк шухăша кайнă. Шухăшласа пырса, йала пырса кĕнине те сисмен.

* * *

Пуйан Хĕлип Иллепе вăрçса йулнă хыççăн, лаши çине ларат те, сивĕпе шурса кайнă вунултă çулхи аҫипе Йулăм кассине вĕçтерет.

Йулăм касси хуларан икĕ çухрăмра лараĭ. Пуйан йал, хурăнташĕсем нумай унта Хĕлипĕн. Вĕсенҫен ытларах «паллакан çывăх çынсем», лаша вăррисем, суту-илÿ тă-

вакансем пурӑнаҫҫӗ вӑл йалта. Тӳрех Кӑркка Ваҫҫи патне пырса ҫарӑнҫӗ.

— Уҫ хапхӑна Ваҫҫа,—хулӑн сассипе кӑшкӑрҫӗ вӑл, хапха умӗнҫе йур хырса тӑракан Ваҫҫана,—куратӑн тӑман тухнӑ, ӑшӑтас пулаӗ килнӗ хӑнасене. Леш ӑна курсан, хӑмӑр сухалне сиктерсе йӑл кулса йаҫӗ те, ҫӗлӗкне илҫӗ.

— Е-е, есимха, паллаймасӑр тӑратӑп, авани? тӑсрӗ вӑл аллине.

— Хӗлип хӑҫан наҫар пурӑннӑ вӑл? тайкаланса пыҫӗ ун патнерех Хӗлип.—Епӗр нихӑҫан та наҫар пурӑнман. Куратни кӑна—терӗ вӑл пӗр литтӑр ерехне кӑларса. Саккускӑна хатӗрле.

— Саккускине ӑна тупӑпӑр—тесе ҫӗриклетекен хапхине хыпаланса йарах уҫса йаҫӗ Кӑркка Ваҫҫи.

— Айтӑр кӗрӗр.

— Ҫавӑт лашана—кӑшкӑрса пӑрахрӗ Хӗлип аҫине. Тимухӗ ҫуна ҫинҫен сиксе анҫӗ те, лашине ҫавӑртса кӗрсе кайрӗ.

— Тӑварса пӑрах лашана, пайан каймастпӑр «Вырттаратӑн пулӗ»—аллине Ваҫҫа хулпуҫҫи ҫине пырса хуҫӗ Хӗлип.

— Какшӗ, какшӗ, епӗ йаланах хавас—ҫаврӑнкалаӗ ун умӗнҫе Кӑркка Ваҫҫи.

Ӗлӗк вӑл вулӑс писӗрӗнҫе тӑнӑ, ӗлӗкреппех иккӗшӗ туслӑ пурӑнаҫҫӗ. Ваҫҫана хулӗнҫен ҫавӑртса кӗрсе кайрӗ. Тимух шӑннӑ пӳрнисене вӗрсе лаша тӑвараӗ. Ӗҫекен ашшӗпе ҫӳреме ӑна питех кӑмӑлне каймасӗ те, анҫах мӗн тӑван, пӗрре ҫех кӑшкӑрса пӑрахаӗ вӑл ӑна.

Лашине тӑварҫӗ, ҫиме паҫӗ, йапалисене пухкаларӗ те, пӳрте кӗҫӗ. Сӗтел хушшинҫе ашшӗпе Ваҫҫа калаҫса лараҫҫӗ, умӗсенҫе литтӑр ерех, сӗтел тулли апат: хур какайӗ, сысна какайӗ, ҫӑкӑт, ҫу хут те хӑшне ҫи.

— Ну ман кин ӳсети? Ӑҫта кайнӑха вӑл курӑнмасӗ—тесе пӑхкалаӗ хӗрелнӗ куҫӗсене ҫавӑркаласа.—Хӗр курма

кĕтĕмĕр. Авă пулас кĕрĕвĕр—кăтартаť вăл Тимух çине. Ашшĕ тăрăхлани Тимуха питĕ ĕрлентерет, çапса пăрахĕђђĕ вăл, анђах вăйĕ çитеймест.

— Кирлĕ мара калаçса ларан, ĕçсе усĕрлнĕ те, тек аташаť—тет Тимух уринђи йурне çĕлĕкĕпе шаккаса.

— Ђарăн, хуп çăварна, анђăк,—кăшкăрса пăрахрĕ ашшĕ.—Аçу каланине итлес пулаť, нумай калаçсан çак тăманра çуран кăларса йарап. Илтетни?

— Ну-ну шавламастăп — çемçен каласа пусараť ăна Тимухĕ.

— Тоттă. Ну, лар сĕтел хушшине, кăçал çăва тухсанах Варварине кин тăватпăр. Есĕ пымĕ тетни? Укçа парсан пыраť вăл, çапла-и Ваççа?—терĕ те, кайран ĕлĕкхине астуса çĕнĕрен тўрлетрĕ.—Çапла-и Ваççили Йефремђă?

— Çапла Хĕлип, çапла, сирĕн пеккине те памасан, сирĕншĕн ўстеретĕп, анђах ларма кайнăха вăл.

— Ну ĕçетпĕр киншĕн, тытрĕ вăл ерех курки. Ей! пулас кĕрў, тыт куркăна.

Тимух шăннипе, тата çилли тулса çитнипе, пĕр ђăмăр ерехĕ пырса ĕçсе йађĕ. Пĕтĕм çан-çурăмне касса кайрĕ ерехĕ. Унтан урине анса ăшăтрĕ. Нумайђђен сўпĕлтетсе ларђĕç пуйан Хĕлиппе Кăркка Ваççи. Иккĕшĕте ўсĕрĕлђĕç.

Кăркка Ваççи хĕрнипе куçĕсем, ђĕпĕ куçĕ пек хĕсĕнђĕç, ĕхĕлтетсе çеç лараť.

— Ну мĕнле сирĕн йалта ĕçсем?—çыхланакан ђĕлхепе сăмаха сĕтĕрет Хĕлип.

— Аванах мар, ђухăнсем пĕрлешўллĕ хуçалăх тума çырăнђĕç. Ыррине ан кĕт. Хаçатсем çинђе те пит хăрушă çыраççĕ. Кулаксене класĕпех пĕтермелле теççĕ.

— Пиреи?—сиксе тăђĕ Хĕлип,—пире пĕтермеи?—тайкаланаť вăл сĕтел хушшинђе.—Хĕлипĕн пур унăн. Мухтанса каламастăп Ваççили Йефремђă. Ну пурăнма мушнĕ. Тыт, йара пар.

— Пĕлетпĕр ĕнтĕ аван пĕлетпĕр, анҫах йулашки вăхăтра хăрушă хыпарсем килеççĕ, епĕ пĕрмай хаçат вулаcа пыратăп.

— Ей-е, пăрахха есĕ ун çинҫен сӳпĕлтеме, халĕ вунсаккăрăмĕш çулхи мар. Пирĕн йалта та Илле, пĕлетĕн пулĕ, Йĕмсĕр Макçăм ывăлĕ, колхос тăватăп тет. Тутăрха, курăпăр, мĕн пулĕ унта, пиртен пуçне ĕç кăларайĕçи.

Çĕрĕпе йăванса кайса çывăриҫҫенех ахăрашса ларҫĕ пуйан Хĕлип Кăркка Ваççи патĕнҫе, Тимухĕ кутник çине кайса выртнă та, хăрлаттарса çывăрат. Куçне уçса йаҫĕ те, унăн умĕнҫе Ваççа арăмĕ тăрат.

— Ме сар. Айна çак сăкмана, кĕрĕке пуç айне хур,— тет вăл Тимуха тумтирсем парса,—ме тата пĕр минтер. Ҫăнахах хăçан та пулин пирĕн кĕрӳ пулăни тен?

Урамра çил шавлат. Куç уçса пăхма çук тăман çăват, сивĕ те, хăрушă тулта.

## II.

Килне таврăннăранпа Иллене пĕр шухăш ниçта та, нийепле те канăç памаст. Çав шухăшпа çывăрма выртат, çавăнпах ирхине тăрат те, Лҫава патне, йе Миххал Йекорҫҫă патне кайса канашлат. Колхос тусан хресҫен ĕçĕ çăмăлланасси, вĕсен нушаллă пурăнăçĕ аванланасси, пурне те куçа курăнса тăрассăн туйăнат ăна. Анҫах çавăн пек пысăк ĕçе сасартăк тума çук, тĕрлĕ йенҫен пăхса тухас пулат, ҫухăнпа вăтама авантарах ăнлатарас пулат, вĕсем хăйсем мĕнле шухăшланине кирлĕ таран пĕлес пулат. Кашни ернере темиçе хут пуху туса иртернĕ, анҫах пуринпе те тĕппипех калаçса татăлман-ха.

— Халиҫҫен ушкăнлă хуçалăхсăрах пурăннă—теççĕ хăшĕпĕрисем.

— Тăвăрха, тăвăр, курăпăр унта, лайăх пулсан ҫарăнса тăрас çук,—теççĕ теприсем.—Хамăрах сайавлени парăпăр.

Çапла пĕрпĕрин çине çаврăнса пăхса, шухăшламасăр-тумасăр кĕрсен, кайран хамăра йăвăр пулмĕши тесе иккĕллĕ шухăшлакан вăтам хресҫенсем ҫухăнсене те пĕрлешме, ĕçе пуçласа йама ҫарса тăраççĕ.

Ĕлĕкреннех пуйан Хĕлип патĕнҫе тарçăра пурăннă Тарас та пĕр ҫухне капла, тепĕр ҫухне тепĕр май калаçкалаҭ.

— Çынсем çырăнсан манра ĕç ҫарăнмасҭ—тет вăл ĕнсине хыçкаласа.

— Кунне çур кĕрепенкĕ çăкăр çеç параççĕ унта колхосра—тесе сăмах сарса çӳреççĕ кулаксемпе вĕсен майлисем. Аҫасене пĕрлештереççĕ, тата темĕн те пĕр усал сăмах сарнă йалта ушкăнлă хуçалăха хирĕç пыракансем.

Йулашки вăхăтра ҫухăнпа вăтамсенҫен ҫылайĕшĕ—ушкăнлă хуçалăх туса пĕрлешсе ĕçлесен аван пулассине ăнланма пуçларĕç. Хăйсем урамра, йе пĕр ҫухăнтарах çурта пухăнса канашлаççĕ ун çинҫен.

— Ушкăнлă хуçалăхра пурăнма наҫар пулсан, таврари йалсенҫе колхос тума тăрăшмĕҫҫĕç—теççĕ пĕрпĕрне.—Усси пуртан пĕрлешсе ĕçлеме тăрăшаççĕ пулĕ.

— Совет влаçĕ ҫухăнпа вăтама нихăçан та усал туман, вĕсемшĕн тăрăшни сахал мар—тет тепри.—Налук йенҫен те пулăшма тăрăшаҭ. Колхоса та çавăн пиркийех тăвасшăн пулĕ. Кулаксен сăмахне итлес пулмасҭ пирĕн,—Илле ахаљтен тăрăшмасҭ пулĕ, вăл тĕнҫе курнă çын, çыру та ăста пĕлет. Тытăнас пулаҭ пирĕн, калаçса вăхăта ирттерес мар—канашлаççĕ вара пĕрле пухăнсан, анҫах калаçнисенҫен пуçне урăх нимĕн те тумаççĕ. Кашни хăй килне таврăнаҭ те, килти вак-тĕвек ĕç айне путса мансах кайаҭ вăл шухăша.

Апат çиме ларсан, хĕрарăмсем хирĕлме тытăнаççĕ тата. Вĕсене ҫуркӳре пуп çепĕç сăмахсем каласа, турăпа хăратса тĕттĕм пуçĕсене çаварса пĕтернĕ.

— Татах çав пухура пултăн пулĕ, колхос çинҫен супĕлтетрĕн пулĕ?—хускатаҭ вара Тарас арăмĕ те.—Ĕçлес-

ђĕ хăв ĕçне, унта уссăрланса лариђђен. Тфу-у, ватăлсан ăсран тайăлтăн.

— Ан кăшкăрашха есĕ Плаки, пĕлмесĕр ан калаç, пĕрлешсе ĕçлесен авани тен?

— Ђарăн! Ухмахланса ан лар сĕтел хушшинђе. Пĕр ĕнене виççĕн сумалла мари?

— Ан мăкăртатсам есĕ те, йăлăхтартăн—сулаҭ Тарас аллине.

Йалта пуринђен ытла тăрăшса ĕçлекенсем тăваттăн: Илле, Лђава—йађейккă çекреттарĕ, Кавруç—комсомолĕс, тата йалти уђиттĕл—Миххал Йекорђђă. Çĕр çывăрмасăр ĕçлеççĕ вĕсем, анђах, паçăрах каларăмăр, тăруках нимĕн те тума çук, çитменнине тата кашнинех унтан пуçне урăх ĕçсем «мăй таран». Миххал Йекорђђă ађасене хута вĕрентсе кăларасси пур, каçпа ӳссе çитнисене вĕрентет. Иллепе Лђава та ĕçрен пушанаймаççĕ. Ушкăнлă хуçалăх тăвасси вĕсен ђи малта тăраҭ пулсан та, икĕ ернере нумайах ĕç тăваймарĕç, тепĕр йенђен тата ĕçе васкаса тусан йăнăш тăвасран та шикленеççĕ.

Хăшпĕр çĕрте кирлĕ таран сӳтсе йавмасăр, хресђенсене малтан çителĕклĕ ăнлантармасăр васкавлă, йалĕпех колхос тунă та кайран вара пит нумай ђлентан калла тухнă. Тепĕр çĕрте хăшĕ ушкăнлă хуçалăх тăвас ĕçе тĕрĕс мар, йăнăш ăнланса, ђăх-ђĕпсене, хур-кăвакалсене, вак вылђăхсене, тата ытти пĕрлештермелле мар йапаласене те пĕрлештерсе, ĕçлеме пĕлмесĕр, хăйсен ђленĕсене хăратса пĕтернĕ. Илле апла тăвасшăн мар, малтан пурне те ушкăнлă хуçалăхсенђе мĕнле ĕçлесси, мĕнле пурăнасси çинђен, кайран ĕçлесе пухăннă тупăша йепле уйăрмалли çинђен çителĕклĕ ăнлантарса, кам кĕрес текенсене çеç илсе, ĕçе малтанах йĕркеллĕ хускатса йарасшăн. Анђах çураки те çывхарса килет, васкамалла.

— Ĕçе ытла нумай тăсма йурамасҭ, пайан халăха

пухса устав йышăнас,—есĕ мĕнле шутлатăн Лђава йулташ?—терĕ вăл ун патне пырсан.

— Çырăнас текенсем нумай, кĕрес мар текенсем йулĕç, пайан епĕ хам та çапла шухăшланăђђĕ, сан патна пырас тесе тăраттăм, есĕ, пĕлнĕ пек, хăвах килтĕн—терĕ вăл çыракан токлатне пĕр хĕрнелле пăрса.

— Калаçни çитĕ, ĕçне тăвас пулаť.

III.

— Пирĕн çĕнĕ устава йышăнаси çеç йулђĕ, анђах ăна йышăниђђен малтан Илле токлатне сӳтсе йавмалла пулаť—терĕ хулари типокрафинђен килнĕ рапођђи Мухтарăв.— Преçитиумра тăватă ыйту пур, урăх çырса паракансем пулмарĕç, ыттисем сăмахпа каласа ыйтасшăн пулаť. Камăн тата мĕнле ыйту пур?

— Çырса панисене каласа патăр малтан—кăшкăрђĕ пĕри кĕтесрен.

— Каласа патăр малтан çав ыйтусене—сасă пађĕ тепри, малта лараканcенђен пĕри.

Вĕсен ĕçне пулăшма хуларан рапођђисем килнĕшĕн Илле çав тери савăннă. Çавăнпа пулас вăл, трипунă умĕнђе кулкаласа кăвак тутăрĕпе (Верук парни) çанки çинђи шултра тарне шăлса преçитиума панă хут таткисене вуласа тăраť. Те ыйтăвĕсем кулăшлăи тен... пĕлме çук. Преçитиумра ларакан унăн савни Верукăн та куçĕсем пит савăнăçлă пăхаççĕ. Хăй токлатне Илле аван каласа панăшăн, халăх ăна кăмăллах итленĕшĕн савăннă.

Ушкăнлă хуçалăхсене йепле майлаштарасси çинђен вĕсене Хĕрлĕ çарта аван каласа ăнлантарнă, çитменнине тата килнĕренпе вăл тем ђухлĕ кĕнеке вуланă, хаçатсен кашни номĕрне вуласа пынă. Устава пит аван пĕлет. Уйрăм хуçалăхра пĕр çулне мĕн ђул тупăш пулнине, ушкăнлă хуçалăхра тырă тухăçĕ мĕн ђул ӳснине кăна мар, трактăрпа ĕçлесен хресђен ĕçĕ йепле йӳнелессине те çĕрĕ-çĕрĕпе шутланă вăл.

— Мĕн краççын сайа йарса ларатăн çĕр çывăрмасăр, вырт! ыран ир тăмалла,—йатлаçаҕҕĕ вара Иллен амăшĕ.

— Ĕç пур анне, ан қанçĕрле тархасшăн—теҕҕĕ вăл амăшне.—Пăрăнха урăх çĕрелле!

— Ĕçĕ нихçан та пĕтес çук вăл.

— Пысăк ĕç пур анне, хăвах курăн.

— Колхос пулĕ. Тытса хĕнĕçха хăна. Пуйансем сан пирки мана та йатлама тытăнҕĕç—ӳпкелешет амăшĕ.

Мĕн тăвас тетĕн, ытти тĕттĕм, хут пĕлмен хĕрарăмсем пекех, ăнланаймаст амăшĕ... Çапах та тытăннă ĕçе пăрахма шухăшламарĕ Илле. Пайан вăл, пĕр сехете йахăн токлат каланă хыççăн пĕр хăрамасăрах ыйтусем параса кĕтсе тăраӗ. Пур йенҕен те тĕплĕн шухăшланă вăл хăй ĕçне.

— Пĕри кунта, ушкăнлă хуçалăхри тупăшсене йепле пайласси çинҕен ыйтса çырнă—пуçласа йаҕĕ Илле кăвак тутăрне кĕссине ҕиксе.—Ман токлатра пит пысăк ыйтусем пулҕĕç, паллах, пĕр токлатра, пурне те кирлĕ таран çутатса парасси çăмăл ĕç мар. Çавăнпа ĕнтĕ ку пысăк ыйтăва, ертелти тупăшсене йепле пайласси çинҕен те çителĕклĕ ăнлантарса параймарăм пулас...

— Кĕскентерех кала, вăхăта вырăнсăр ан иртер!—астутарҕĕ ăна Мухтарăв (пуху претçетаттĕлĕне ăна суйланă).—Устава пурпĕрех тепĕр хут вуласа тухмалла пулаӗ. Кĕскен кала!

Илле малтан кĕнеке тăрăх вуласа парасшăн пулҕĕ, анҕах «кĕске каласа пар» тенипе аллинҕен кĕнекине пăрса хуҕĕ те, трипунă çине тайăнса уççăн калама пуçларĕ:

— Претçетаттĕл кунта кĕскен калама хушаӗ, епĕ хам та пĕр-икĕ сăмахпа каласа пама тăрăшатăп та, анҕах кун пек пысăк ыйтăва çийелтен шăйăрттарса кайни вырăнлă пулас çук, çавăнпа...

— Çавăнпа... хăвăртрах каласа пар— пӳлсе каларĕ Мухтарăв.

— Çавăнпа епĕ вăл ыйту çинђе кирлĕ таран ђарăнса тăрасшăн—кăшт малалла уртăнса каларĕ Илле.—Тупăша пĕлсе, ђлеңсем хушшинђе тĕрĕс уйăрса парасси колхос пурнăçĕнђе пит пысăк вырăн йышăнса тăрать, колхос ĕçĕсем ăнăçлă пулса пырасси те ђи малтан çавăнтан килет. Колхоссенђе ĕçлесе пухăннă пурлăха, тупăша ђленсем хушшинђе уйăрас ĕç ку таранђђен пур çĕрте те пĕр пулса пыман, мĕншĕн тесен хăш-пĕр колхоссем 10—12 çул кайаллах уçăлнă, тупăшсене уйăрмалли вĕсен хăйсен **йĕрке** пулнă, теприсен, нумай пулмасть оркanisatsilennipe, оппăтсем, сăнавсем пулман, мĕнле уйăрсан авантарах пулассине пĕлмеççĕ, вĕренсе çитейменха, тата ыттисем, пирĕн пек халђ çеç ђăмăртанаççĕ, халђ çеç орканисатсиленеççĕ, вĕсен вара нимĕн ђухлĕ оппăт та çук. Анђах ку тĕлĕшпе пире, малтантарах уçăлнă колхоссем кăтартса пример парса тăраççĕ. Унтан пуçне тата çавăн çинђенех колхоссен çак ĕçри мĕн пур оппăђĕсене шута илсе çырнă кĕнекесем пулăшĕç пире. Епĕ ун çинђен сахалах вуламан, вăл ыйтăва ăнланса çитрĕм теме пултаратăп, хам вуласа пĕлнине сире каласа парас тетĕп...

Шкул çурђĕ ђăнк тулнă. Алăка йарах уçса пăрахнă пулса та—пăђă, тарлаттарать. Пайанхи пухăва ђухăнсемпе вăтамсем çеç мар, пуйансем те «мĕн хăтланнине курас» тесе, май пулсан ĕçе ђăрмантарас тесе, пĕрпĕринпе канашласа пырса ларнă. Темĕскер кĕтеççĕ вĕсем, пĕрпĕрне куçĕсене хĕскелесе, пăшăлтаткаласа лараççĕ, вăхăтран вăхăта Илле çине çисе йарас пек куçĕсене тавăрса пăхаççĕ.

Халăх çав тери нумайăн пухăннипе пўртри сывлăш йавăр, пуçа тарлаттарать. Çавăнпа пулас—кăмака çумĕнђе ларакан Максăм сиксе тăђĕ те, Илле сăмахне пўлсе хытă кăшкăрђĕ:

— Ун çинђен каласа ăнлантарнăиç. Мĕн вăхăта ирттермелле!—куçса ларђĕ вăл ђуређе патнелле.

Мухтарăв—вăл ăшăпа аптранипе çеç çапла каланине сисрĕ пулас.

— Есĕ ăнланнă пулĕ те, ыттисем кирлĕ таран ăнланайман, çавăнпа вăл хут çырса панă та—терĕ Мухтарăв сасă йенне пăхса.

— Итлессӳ килмест пулсан, тухса кайма пултаратăн. Халăх мĕнле? Токлатђăк ăнлантарса патăри?—ыйтрĕ вăл пухури халăхран.

— Кирлĕ, ăнлантарма кирлех, васкама йурамаст—кăшкăраççĕ хăшĕсем; теприсем «вăхăт вăрăм тăсăлаť» тесе васкаççĕ. Пĕлес текенсем ытларах.

— Ђи малтан çакна авантарах астăвас пулаť, йулташсем—пуçласа йађĕ Илле пухура сас-ђĕвĕ, шавлани ђарăнсан.—Хапрăк-савăтсенђе рапођђисене ĕç укçи, шалу тӳлеççĕ пулсан, колхосра апла мар, колхосра ĕçлекен ђлене ĕç укçи мар, ĕçлесе пухăннă **тупăшăнăн** пайне, хăй ĕçленĕ тăрăх, уйăрса параççĕ. Çапла ĕнтĕ, тупăш уйăрнине ĕç укçипе арпаштарма йурамасť, вĕсен уйрăмлăхне авантарах ăнланса илес пулаť. Колхоçнĕке ĕçшĕн тӳлени тата йепле ĕçленине хисеплесе, уйăрса пани пулаť. Ĕлĕк уйрăм хуçалăхра ĕçлекен хресђен хăй хуçалăхĕнђе ĕç укçи илсе тăман, халĕ те, колхоса кĕрсен те, вăл ĕç укçи илме пултараймасť, çĕрĕçлекен—çĕрĕçлекен вырăнсенђех йулаť, çавă çеç уйрăмлăхĕ те: халиђђен есĕр уйрăм хуçалăхра ĕçленĕ, халĕ ĕнтĕ пĕрлешсе колхосра ĕçлеме пуçлатăр.

— Пурпĕрех мари вăл?—ыйтрĕ Тарас иккĕмĕш йĕркерен.—Хапрăк-савăтра та ĕçленĕ тăрăх тӳлеççĕ, кунта та...

— Йепле ăнланаймастăн есĕ Тарас? Уйрăмлăхĕ пит пысăк: хресђен колхоса çырăнинђен, хăйĕн хуçалăхĕнђен тупăш илсе, хăйне кирлĕ çĕре салатнă, хуçалăхсенђе кирлĕ йапаласем туйаннă, хуçалăхне пысăклатма, аванлатма тăрăшнă, йалхуçалăх налукĕ тӳленĕ, халĕ те

колхоçнĕк, хăй ĕçленĕ тăрăх, колхос хуçалăхĕнђе пухăннă тупăшăн тивĕçлĕ пайне илет.

— Апла пулсан колхоса кĕнинђе мĕн усси пур вара? —ăнланаймаст Макçăм.

— Колхоса кĕнинђе-и? Колхоса кĕрсе пĕрлешсе ĕçленин усси пурне те куçа курăнса тăрат̆: хресђен уйрăм хуçалăхра пĕђђен ĕçлесе, пысăк йалхуçалăх машшинĕсем туйанаймасѣ, вăрлăхне ĕретлĕ, йурăхлă тасатаймасѣ, йурăхлă сухалаймасѣ, акрономсен вĕрентнĕ тăрăх ĕçлесе пыраймасѣ, çавăнпа унăн тырă тухăçĕ нађар пулат̆, йепле нушалансан та, йепле тăрăшсан та вăл хăй хуçалăхне татăклăн ,çĕнетме пултараймасѣ, ĕмĕр-ĕмĕр нушаланса пурăнат̆. Епĕр илемлĕ пурнăç тăвас тетпĕр. Пĕрлешсе ĕçлесен ăна тума пулат̆. Пирĕн районта тепĕр çул машшинлă-трактăрлă стантси пулмалла теççĕ. Малашне трактăрпа сухалаттарма, трактăрпа тырă тирпейлеме май пулат̆, кăçалах пире йалхуçалăх машшинĕсем памалла тунă... Анђах ун çинђен тепĕр ђухне калаçăпăр, халĕ тупăша уйăрасси çинђен калас тенĕђђĕ.

Çапла ĕнтĕ, колхосра пухăннă тупăша ђленсене кашни мĕн ђул, тата йепле ĕçленĕ тăрăх уйăрса параççĕ терĕмĕр. Сăмахран çакăн пек пример илер: хатĕрленĕ просвотствăллă план тăрăх пĕр çул хушшинђе пирĕн 36.000 тенкĕ тупăш илмелле пултăр, расхут çметти тăрăх, тĕп пурлăха ўстерме, çĕнĕ машшинсем туйанма, хуçалăхри ытти расхутсем вађђи, ађасене вĕрентмешкĕн, т. ыт. вађђи те 22.220 тенкĕ кирлĕ пултăр. Йулашки сумăна— 12.780 тенкĕне—колхос ђленĕсене кам миçе кун ĕçленине шутласа уйăрса памалла. Йе тата çакăн пек пример илĕпĕр: калăпăр, хуçалăхăн пĕр пайĕнђе план тăрăх 750 ĕçкун ĕçлесе 1000 тенкĕ илмелле. Кунне вăтамран пĕр тенкĕ тўлемелле пултăр, çапла вара ĕçлекенсене 750 тенкĕ тўлемелле пулат̆, тупăш мĕн пурĕ—1000 тенкĕ терĕмĕр. Тупăша ĕç-кунĕсемпе танлаштарсан—75% пулат̆, урăхла каласан, пĕр куна кашнине вăтамран 75 пус тўлемелле

пулаҫ. Анҫах тупӑш ытларах, 1000 тенкӗ мар, 1500 тенкӗ пулма пултарать, ун ҫухне вара ӗҫлекенсене 750 тенкӗ ҫеҫ мар, 1500 тенкӗн 75%, урӑхла каласан, 1125 тенкӗ, йе кашнине кунне 1 тенкӗ те 12 пус ҫурӑ тивет. Тупӑш ытларах пулсан, ӗҫлекен ҫленсем те ытларах илеҫҫӗ. Тепӗр йенҫен тата ҫакна та астумалла: план тӑрӑх йышӑннӑ ӗҫе колхоҫнӗксем кӗскерех вӑхӑтрах туса пӗтерме пултараҫҫӗ. Сӑмахран, 750 кун ӗҫлес вырӑнне 500 кунта ӗҫлесе пӗтерсен, 1.125 тенке 750 ҫине мар, 500 ҫине уйӑрмалла. Ҫапла вара ӗҫлекен ҫленсем кунне 2 тенкӗ те 25 пус илеҫҫӗ.

— Ой-ой, ой! шутласа та кӑларас ҫук—-терӗ Микихвер ҫӗлӗмне паклаттарса. Пурте ун ҫине пӑсха илҫӗҫ.

— Кайарахпа хӑнӑхсан шутласа пыма йавӑр пулмӗ, колхосра пур ӗҫе те шута илсе пымалла—терӗ Илле Микихвер йеннелле пӑхса, умӗнҫи стаккантан шыв сыпса илҫӗ те, малалла калама пуҫларӗ.

— Анҫах тупӑш уйӑрнӑ ҫухне ҫленсен квалификатсине те, урӑхла каласан, кашниӗ ӗҫе хӑнӑхнине, ӗҫлеме вӗренсе ҫитнине, унӑн ӑсталӑхне те астӑвас пулаҫ. Ӑста ӗҫлекене ыттисем пекех, пӗр хак тӳлеме йурамасҫ, унӑн ӗҫӗ те йавӑртарах, ответлӑхӗ те пысӑкрах, вӗреннӗлӗх те кирлӗ, ҫавӑнпа тупӑша уйӑрнӑ ҫухне ҫленсем мӗнле ӗҫре ӗҫленине те аван астумалла. Калӑпӑр, тракторис кунне 1 тенкӗ те 20 пус илет пулсан, аслӑ тракторис, паллах, унтан ытларах илет, мӗншӗн тесен унӑн ответлӑхӗ ытларах. Ҫавӑнпа тупӑша уйӑрнӑ ҫухне колхосри мӗн пур ӗҫсене виҫӗ пайа: ҫӑмӑл ӗҫсем, вӑтам ӗҫсем, тата йавӑр ӗҫсем ҫине уйӑрмалла.

— Вӑл мӗскер йапала тата?—Сӑмах хушса хуҫӗ Тарас. Пухури халӑх Илле сӑмахне пӗр сасӑ кӑлармасӑр итлет, пуйансем ҫеҫ кӑмака патӗнҫе пӑшӑлтатса вӑрттӑн кулкаласҫӗ,—тухса калама хӑйаймасҫӗ пулас. Илле, вӗсем пӑшӑлтатса кулнине сиссен, ҫиленсе пӑхса илҫӗ те, аллинҫи кӗнеке тӑрӑх колхосри мӗн пур ӗҫсене мӗнщӗн

виçĕ пайа уйăрни çинҫен тепĕр хут каласа паҫĕ. Халăх вĕлле хурҫĕсем пек шавлама тытăнҫĕ, Мухтарăв шăнкрав çуккипе сĕтел çине аллипе шаккаса ҫарать.

— Ҫарăнăр, ыйту пулсан, преçитиума парăр, епĕр кунта çырса пыратпăр— ҫарать вăл кĕрлекен халăха.

Пайан пухури халăх ытла шавламаннинҫен тĕлĕннĕ Илле. Иртнĕ пухусенҫе сăмаха йĕркеллĕ калама памасҫĕç. Икĕ пуху вăрçса-тавлашса саланнине те аван астăвать Илле. Пайанхи пуху йĕркеллĕн иртессĕн туйăнать, анҫах çур кĕрепенкĕ çăкăрпа пурăнма пулаті? текен ыйтусем киле пуçласан, тата çилĕллĕ сасăпа кăшкăрашнисем илтĕнме пуçласан, пуйансем ĕлĕкхи пекех халăха пăтраса ĕçе ҫарас шухăша пăрахманнине, вĕсем те хăйсем пĕрлешсе ертеле тапăнасси сисĕнме пуçларĕ.

— Сӳтсе йавнă ҫухне кăшкăрашассăн пулас — шухăшларĕ Илле, пĕр кĕтесре пуйансем хытах шавлама пуçласан.—Ниҫҫава-а, питех çӳлелле сикеймĕр, епĕр нумайăн—килсе кĕҫĕ ăна тепĕр шухăш.—Ҫухăнсемпе вăтамсем пирĕн майлă.

Ыйтусем пĕтсен, сăмах тухса калама пуçларĕç. Нумайăн пулҫĕç калакансем.

— Ертел тăвас, пĕрлешсе ĕçлес! Кулаксем пурнăç памаççĕ. Йалĕпех колхос тăвас!—тухса калаççĕ ҫухăнсем. Çав сăмахсем çеç кĕреççĕ йалсовет претçетаттĕлĕпе калаçса ларакан Илле хăлхине.

Ентри вăл хăйĕннех перет. Тăрса тăрас мари, халăх мĕнле шутлать, кĕрес текенсем кĕҫҫĕр, кĕрес мар текенсем кирек мĕн туҫҫĕр, ĕçе ăнтарса пулĕи—иккĕленет вăл. Илле, тухса калакансене итленипе, ăна хирĕç нимĕн те каламарĕ. Претçетаттĕл Ентри хăй те иккĕленле шухăшланине аван пĕлет вăл.

— Хĕрĕх çул ытла нушаланатăп, тем пек тăрăшатăп, анҫах пĕҫҫен пурнăça аванлатма çук, кашни çулах тыра çиме çитмест, çи-пуçа тăхăнма тумтир те илейместпĕр— тесе пĕтерҫĕ хăй сăмахне ҫухăн Ваңҫă.

— Кăмака çинҫе выртма йурататăн çав, çавăнпа çĕтĕк йĕмпе çӳретĕн— кăшкăрса пăрахрĕ сиксе тăрса пуйан Куçма.—Тăрăшса ĕçлес пулаŏ, а есĕр кахал, ĕçлес килмест сирĕн—терĕ те вырăнне ларҫĕ.

— Çук, тĕрĕс мар, тĕрĕс каламастăн есĕ,—хĕрсе калаçма пуçларĕ Ваҫă, çĕтĕк çанăллă аллисене тăскаласа. Кăмака çинҫе выртма вăхăтăм çук манăн. Есĕ мана кураймасăр калатăн! Тĕрĕс, есĕ мантан пуйан пурăнатăн, çурту та вĕр-çĕнĕ, тимĕр витнĕ санăн, анҫах кам вăйĕпе пуйрăн есĕ, кала кам вăйĕпе?--туртăнаŏ ун патнелле Ваҫă,—Тимахви, сан арăмун шăллĕ, пуйтарҫĕ сана, ăна пурте аван пĕлетпĕр. Епĕ санран кайа ĕçлеместĕп, анҫах... пĕлтĕр лаша ӳкрĕ, хуçалăх пĕтсе ларҫĕ...

— Пĕлетпĕр, найан çын мар вăл, Куçма çиллипе çеç тавлашаŏ унпала—кĕрлет пухури халăх.

— Пĕр канмасăр, çĕр çывăрмасăр ĕçлетĕп, анҫах хуçалăх пĕр наҫарлансан, пĕҫҫен нимĕн те тума çук. Тиххăн кулак мĕншĕн пуйан?.. Ĕçлесе курнăи вăл ман пек, ҫухăнсем пек?—ҫарăнмасŏ çилли тулса çитнипе Ваҫа.— Çук, çын тарĕпе, çын вăйĕпе çеç пуйнă вăл. Кам ĕçлемен ун патĕнҫе, кама вăхăтлă, йĕркеллĕ укçа тӳленĕ вăл? Кулаксен аллинҫен тухас тесен пирĕн, ҫухăнсем, вăтамсемпе пĕр сăмахра пулса ертеле çырăнас пулаŏ—тесе пуçне тайрĕ вăл йулашкинҫен.

— Тĕрĕ-ĕ-ĕ-с! Колхос тăвас. Ваҫă тĕрĕс калаŏ.

Халăх икĕ пайа уйрăлни, камсем йепле шухăшлани аван палăрма пуçларĕ.

— Мана сăмах парха!—сиксе тăҫĕ преçитиумра ларакан Верук.

— Кала.

— Йалта колхос уçас пирки пуйансем темĕн те пĕр калаççĕ пулсан та, хĕрарăмсем иртнĕ пухура, колхос уçас ĕçе пулăшмашкăн сăмах паҫĕç, уйрăм постановлени йышăнтăмăр.—тепĕр майăнлатарҫĕ вăл трипунă патне тухса.—Ĕнер телекаткăсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта

пухăннă хĕрарăмсем хавас пулђĕç. Лишшентсă арăмĕсем, хирĕç пыма хăтланђĕç те, вĕсене пухуран хăваласа кăлартăмăр—тесенех пухури çынсен пĕр пайĕ алă çупма пуçларĕ.

Илле Верука тĕлĕнсе пăхса ларат̆, Верук та çывăрмаст̆, хăй ĕçне тăват̆—шухăшлат̆ вăл. Анђах Верук йепле тăрăшса ĕçленине авантарах пĕлсен, тата ытларах савăнса йуратĕђђĕ вăл ăна.

— Акă колхос уçсан трактăр илме тесе хăш-пĕр хĕрарăмсем хушпувĕсене, шĕлкемисене пађĕç—тесе тутăрне салтса сĕтел çине хуђĕ Верук виçĕ хушпу, икĕ шĕлкеме. Халăх тĕлĕнсе пăхса ларат̆.

—- Вĕт шан хĕрарăмсене! Мĕн хăтланаççĕ вĕсем!

Верук хăй вырăнне кайса ларсанах Йăкнат сиксе тăђĕ. Претçетаттĕлтен сăмах ыйтмасăрах, вăл икĕ аллине те арман çунађĕсем пек çавăркаласа ахăрашма тытăнђĕ.

— Кунта Илле—«колхосра пыл та çу пулат̆», тесе савăнтарат̆ пире—пуçласа йађĕ вăл Илле йеннелле меллке пуçне сулласа.—Ун шуђĕпе колхосра пурнăç райри пек аван пулмалла,—йан кайат̆ унăн хулăм сасси.

— Кам каларĕ сана? Мĕнле «рай» кулса калат̆ ăна пĕр çамрăк. Йăкнат ăна итлемест.

— Йурĕ, колхос уçăпăр. Пай укçи тӳлес пулат̆, манăн, калăпăр, икçĕр тенкĕ тӳлемелле пулат̆, Мĕтри патракăн, мĕн пур пурлăхĕ те çирĕм тенкĕрен ытла тăмаст̆.

— Ан кĕр еппин, ан çырăн, сана ирĕксĕр кам ђĕнет?—сăмах хушса хуђĕ Тарас.

— Йал çырăнсан, манăн пĕђђен тăрса йулас-и?

— Капла калаçсан йулăн çав.

— Йурат̆. Ăна та, мана та пĕр пек пайук параççĕ. Тĕрĕс-и капла туни? Йепле вăл тĕрĕслĕх? Апла тума йурамаст̆.

— Сана миçе пайук кирлĕ вара? Миçе хырăм санăн? Виçĕ хырăм мар пулĕçке?—йĕкĕлтет ăна Ваçук, вирлĕ комсомолĕс.—Ха-ха-ха!

Йăкнат ăна шăлне çыртса шурă куçĕсемпе усал вăкăр пек çавăркаласа çиленсе пăхрĕ те, аллине çеç сулҫĕ.

— Е-ей! сире каласса çĕнтереймĕн. Есĕр вĕт пурте пĕр çăварта, пĕр кĕтӳ есĕр.

— Çапла çав.

Йăкнат вырăнне кайса ларҫĕ. Çĕнĕ сăмах калакансем пулмарĕç. Те пайанхи пухура ҫухăнсемпе ҫылайăшĕ вăтамсем колхос уçма хавас пулнипе, пуху хăш йеннелле сулăннине сиссе, Йăкнатран пуçне пуйансенҫен, иртнĕ пухусенҫи пек, вырăнсăр кăшкăракансем нумайăн пулмарĕç, хăйсен шухăшĕсене уççăн калакансем пулмарĕç, хăйсем хушшинҫе пĕрпĕринпе çĕлен пек пулса кăшкăрашни çеç пулҫĕ.

— Вăхăт пирĕншĕн—шухăшлаӑ Илле—ик-виç ерне кайалла ҫухăнсенҫен капла тухса уççăн калакансем пит сахалҫҫĕ.

Çапах та вĕсен хушшинҫе иккĕллĕ шухăшлакансем сахалах мар, çапах та кулаксен сăмахне итлекенсем пурах. Такам туртса кăларнă суйа сăмах: «колхосра кунне çур кĕрепенкĕ çăкăр çеç параççĕ» тени, тата «хĕрарăмсене пĕрлештерсе пурте пĕр утйалпа витĕнсе выртаççĕ» тени нумайĕшне минкĕртнĕ çав. Çавăнпа Мухтарăв «санăн каламалли пур-и?» тесе ыйтсанах Илле паçăрхи вырăна кайса тăрса, тӳрех çав сăмаха пуçласа йаҫĕ.

— Каламалли питех нумай мар—пуçларĕ вăл хăйĕн йулашки сăмахне.

— Иртнĕ пухусенҫе те епĕ ушкăнлă хуçалăхсем çинҫен сахал калаçман, йулашки уйăха çав ыйтупах иртертĕмĕр. Мана пĕр йапала тĕлĕнтерет: çав такам шухăшласа кăларнă «çур кĕрепенкĕ» ыйтăвĕ ҫылайăш-

не пуҫне ҫавӑраттерӗ вӑл ҫиленнӗрех сасӑпа.—Ун пирки епӗ кунта сирӗнпе тӗппипех калаҫса татӑласшӑн.

— Ҫавӑ, ҫапла кирлӗ! Ҫав хӑратать пире—кӑшкӑрҫӗҫ вырӑнтан.

— Ку сӑмахсем суйа иккенне, ӑна камсем шухӑшласа кӑларнине епӗр аван пӗлетпӗр, йулташсем—йан кайать Илле сасси.—Нумай пулмасть пӗри мана тата кулӑшларах йапала ҫинҫӗн каласа тӗлӗнтерҫӗ. Ун шухӑшӗпе (таҫтан шухӑшласа кӑларнӑ вара), ун шуҫӗпе колхосра ҫӑкӑр пӗҫерме йурамасть, мимӗр ҫеҫ ҫитереҫҫӗ пулать имӗш унта. Хӑть ҫи, хӑть ан ҫи, выҫӑ вил, сана кунне пӗр ҫашкӑ мимӗр пӗҫерсе параҫҫӗ пулать те вара, кирек те йепла пурӑн. (Илле ҫакна аса илсен ҫӑтаймасӑр кулса йаҫӗ). Епӗр кунта сире, пупсем пек, суйса каласшӑн мар, епӗр пур йапала ҫинҫен те тӗрӗссине калатпӑр. Нихӑш колхосра та ҫленсене типӗ тыттарма шухӑшламаҫҫӗ. Никама та епӗр, пупсем пек, ҫӳлти патшалӑх сӗнместпӗр. Пӗрлешсе ӗҫлесе, пӗлӗт ҫинҫе мар, ҫак ҫӗр ҫинҫе савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ тума тӑрӑшатпӑр. Аппа пулсан ҫленсене тутӑ усрасси те пирӗн пысӑк сатаҫ. Етем сывлӑхӗ мӗнле апат ҫининҫен нумай килет. Епӗр хресҫенсене, колхос ҫленӗсене сывлӑхлӑ тӑвасшӑн, мӗншӗн тесен ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартасси ҫленсем йепле ӗҫлениннҫен килет, выҫӑ етем хастарлӑ ӗҫлеме пултараймасть. Анҫах ҫапах та кӑҫалхи ҫулах колхосра пыллпа ҫу пулать тесе каламастпӑр епӗр. Пурӑнӑҫа аванлатасси, колхоса аван йӗркелесси хамӑртан килет. Ҫапах та ҫакна калас тетӗп. Колхосра та хресҫенсем хӑйсен уйрӑм хуҫалӑхӗсенҫи пек нушаланса пурӑнсан, ниушлӗ епӗр колхосем уҫма ҫав тери тӑрӑшнӑ пулӑттӑмӑр-ши? Хресҫен пурӑнӑҫне аванлатма ниушлӗ урӑх йӗрке тупман пулӑттӑмӑр-ши? Колхосра ҫеҫ пурӑнӑҫа аван йӗркелеме пулать, унта ҫеҫ тутӑ, пурӑнма пулать. Пӗрлешсе, тата машшинсемпе тытӑнсан ҫеҫ тырӑ тухӑҫлӑхӗ кирлӗ таран ӳсме пултарать, вара колхос пурлӑхӗ ӳсет, ҫа-

ван пирки вара, паллах ђленсен пурнăçĕ те пĕрмайах аванланса пыраť. Маларах уçăлнă колхоссене кайса пăхăрха (кайакансем те пулĕç пирĕн)? Мĕнле пурнаç-çĕ унта хресђенсем? Нумайĕшĕ вĕсен пурăнăçĕкђен тĕлĕнсе килнĕ, анђах сасартăк, пайанах нимĕн те тума çук. Тата çакна калас пулаť, колхосра пурăнас килменнисем унтан кирек хăçан та тухма пултараççĕ, ирĕксĕр никама та усрамаççĕ унта... Манăн тата çав «пĕр утийалпа витĕнесси» çинђен кăларнă ухмах сăмах çинђен кĕскен каламаллађђĕ те, вăхăт çук, вăхăта шел. Вăл суйа сăмах иккенне пур те пĕлеççĕ. Ун çинђен калаçса çăвар тутине сайа йани те питех кирлĕ мар... Алă çупнă сасăпа шкул пӳрђĕ çпектаккăљти пек кĕрлет.

Илле вырăнне кайса ларђĕ. Пуху мĕнле постановлени йышăнасси паллă, ăна пурте аван сисеççĕ. Çавна сисçе пулас, пуйансемпе вĕсен майлисем тухса кайма пуçларĕç.

Устава тепĕр хут васкамасăр вуласа тухсан, урăх ыйту тавраш пулмарĕ.

— Йышăнас, ĕçе вăрăма хăварас мар,—кăшкăраççĕ ђухăнсем.

Алă тăратманнисем 14 пулђĕç, вĕсем ни колхос уçасшăн, ни хирĕç тăратмарĕç.

— Хăвăрах кайран пырса сайавлени парăр, хăвăрах колхоса çырма йăлăнăр—шухăшлаť Илле.

## IV.

Пайан, вырсарни кун, пуйан Хĕлипĕн илесси-парассипе аппаланса вăхăт иртерме шухăш çукђĕ. Хăйсен патне пухăннă çынсемпе йĕркеллĕ калаçса ларас шухăш унăн пайан. Кришшăпа сăмахламалли пур, вăл такçантанпах Хĕлипĕн ватăлма пуçланă 26 çулхи хĕрĕ патне çӳрет. Унпа хурăнташлă пулсан, вăл çапла та совет уђрештенийĕсенђе ĕçлекен, хăш вăхăтра пулăшма пулта-

рат̆, шалуне те пысăк илет теççĕ. Калаçма ăста. Ăна кĕрӳ тусан, сийенĕ пулас çук, пысăк усă пуласса шанат̆ Хĕлип.

Тарас килсе унăн пĕтĕм кăмăлђне пăтратрĕ. Ђей ĕçес тесе сĕтел хушшине кĕрсе ларнăђђĕ çеç, арăмĕ пыђĕ те, хăлхинђен пăшăлтатса каласа систерђĕ.

— Тарас татах килнĕ, сана ђĕнет—терĕ вăл кушак куçĕ пек хăмăр куçне хĕскелесе.—Тухса калаç. Кухнере ларат̆.

Тарас ĕлĕкхи пек йăвашшăн, хăракаласа çеç калаçмаст̆ пайан, çилли тулса çитнĕ пулас. Хĕлип те, вăл вăхăтсăр çӳренĕрен çав тери çиленнĕ: вăйлă, хура куçхарши айĕнђен шăтарас пек пăхат̆ ăна Хĕлип.

— Улталасшăн есĕ, Хĕлип Ваççилђђă. Мана ун ђул çеç тухмалла мар.

— Мĕн ђул вара сан шутупа? Мĕн ђул? Кала?

— Ху пĕлетĕн пулĕ—тет ăна хирĕç Тарас.

Хĕлип çтена çинђен шăнасем варланă шђутне илђĕ те, Тарас сăмси патнех тăсрĕ.

— Акă шђутпа шутлар. Кил кунтарах, авантарах пăх!

— Епĕ кунтан та пит аван куратăп.

— Есĕ ман патăмра виçĕ уйăх ытларах ĕçлерĕн. Çапла-и?

— Йепле виçĕ уйăх ытларах, тăвată уйăха ултă кун çеç çитеймерĕ?—хытă сасăпа тавăрса ларарĕ Тарас.— Шутлама мантăн пулас есĕ?

— Ан тавлаш манпала. Виçĕ уйăх та тăват куни пилĕк кун-и. Пайан-хи пекех астăватăп.

Хĕлип çапла кутăнланни, тата çав илмелли укçашăн темиçе хут çӳретни, Тараса ђăтма çук çилентерђĕ. Çав тери çиленнипе, унăн ĕçпе çуркаланса пĕтне типшĕм аллисем ђĕтреме пуçларĕç. Тем туса пăрахăђђĕ вăл Хĕлипе хăй килĕнђех, анђах нимĕн те тума пĕлмест. Сута парсан укçа мĕн ђул илнине çырса паман. Çитменнипе

тата пайан кун укҫа кирлĕ ăна, ҫиме пĕтнĕ, аҕасем пĕр ҫĕрулмипе ҫеҫ лараҫҫĕ. Ҫапса йарсан—хупса хурасран хăрат̆, аҕасем пĕтĕмпех выҫă йулаҫҫĕ.

— Тарăхтартăн есĕ мана ҫак укҫа пирки, миҫе хут килтĕм ĕнтĕ сан пата? Тĕнке тухрĕ санпала—шăлне ҫыртса кăшкăрса аларĕ Тарас.—Ку иккенне пĕлнĕ пулсан, сан пана ĕҫлеме мар, ура та йарса пусман пулăттăм.

— Есĕ ху мана аптăратса пĕтертĕн—кăшкăрат̆ пуйан Хĕлип мăнтăр аллинҕе шҕута ҫавăркаласа.—Епĕ те аҕа мар, улталаймăн. Илтетни? Улталаймăн!

Сулахай уринҕи хут купăс пек пĕркеленнĕ сăран атти анса ларнă, шурă пиртен ҫĕленĕ кĕпи пиҫиххи ҫыхманнипе сăкман пек сулланат̆. Хура ҫӳҫне йăвăҫ ҫăвĕпе сĕрнĕ пулас, ҫап-ҫутă, йап-йака вырт̆ат̆ унăн тăрăхла пуҫĕ ҫинҕе. Вăл пăравус пек хашлатса кухнере каллĕмаллĕ уткаласа ҫӳрет.

— Ну, мĕнле тăватпăр?—ыйтрĕ унтан Тарас.—Епĕ сан пата, сана курма килмен, питех курассăм килмест, ĕҫпе килнĕ.

— Ман сана курас килет тетĕн-им?—ҕарăнҕĕ урай варрине Хĕлип.—Сана тивĕҫлине параҫҫĕ, ытла пама халăм ҫук.

— Епĕ те тивĕҫлине ыйтатăп санран... Кутăнланас тесен—сан ирĕкӳ. Есĕ, вĕт, пире ҕухăнсене улталама вĕреннĕ.

Нумайҕҕен тавлашрĕҫ Хĕлиппе Тарас, йулашкинҕен Хĕлип ун патне пырса тăҕĕ те, хулăм тутисене ҕĕтретсе пĕтĕм вăйĕпе кăшкăрса пăрахрĕ:

— Есĕ кунта укҫа илме килнĕ-и? Йе йури манпа тавлашма килтĕн-и? Епĕ, вĕт, урăхла та тыткалама пĕлетĕп. Марш кунтан!—тапрĕ вăл урине.

— Вăн йепле! Мăшкăлама-и?

Пит хытă кăшкăрнипе хăраса пулас, малти пӳртрен арăмĕ пĕтĕ ĕне пек йăраланса тухрĕ.

— Кĕр ҕей ĕҫме Хĕлип, ҕейӳ сивĕнет, кайран калаҫса татăлăр—аллинҕен туртат̆ вăл упăшкине.

— Хăçан кайран тата? Çитмĕл хут килме манăн та вăхăт çук. Пайан тӳлемесен ĕçе сута паратăп—терĕ ерленнĕ сасăпа Тарас.

— Укçа илессӳ килсен хăвах килĕн.

— Килместĕп урăх—терĕ те алăка хытă хупса тухса кайрĕ Тарас—Çитĕха вăхăт. Пуçна хыçăн.

— Курăпăр, кам хыçĕ. Хе-хе-хе—кулса, ӳсĕр ,çын пек тайкаланса кĕрсе кайрĕ Хĕлип малти пӳрте арăмĕ хыçĕнђен.

Пуйан Хĕлип, çыру пĕлменскер, хаçатсем вуламасť. Ун шуђĕпе хаљхи самана улшăнмасăр тăмалла.—Револђутси пулђĕ, пăлханђĕç, пуйансене тăпăлтарђĕç, кивĕ нађђалнĕксен вырăнне çĕннисем ларђĕç, «кумуниссем» ĕçлеççĕ, ытлашши тырра сутма та йураť, 18-мĕш çулхи пек мар. Хăш ђухне таварсем çителĕклĕ мар та, анђах çук мар, пурах, укçапа тупма пулаť.

Кăçал налукпа хĕсме тытăнђĕç те, анђах Хĕлип ђейе вăл. Тыррине пурне те кăтартман. Арпалăх айĕнђе шăтăкра икçĕр утмăл пăт выртаť. Ăна никам та пĕлмест. Тарçă тытма та ђармаççĕ. Сĕт-турăх çителĕклĕ. Йепле пурнас мар. Ђухăнсем колхос тăвасси çинђен калаçаççĕ те, вĕсем мĕн, калаçнипех иртерсе йарĕç-ха! Найансенђен мĕн усси пур? Хăшин лаши çук, хăшин плук çук «Трактăр» теççĕ, кĕтсе тăр, такам шанса параť вĕсене. Хăрамаллийех çук-ха, хаçата шанмасť вăл.

— Ниђђава-а-а, пурнăпăр-ха-а-а,—тет вăл йака çӳçне сăтăркаласа.—Çуркунне курăпăр.

— Кулаксене класĕпех пĕтересси çинђен çыраççĕ хаçатсем çинђе—каласа систерет ăна Михаља хăнана пырсан.

Ђас-ђасах пыркалаť вăл ун патне, Хĕлип те кĕркелесе тухаť ун патне çул майĕ. Хăш ђухне хулара пивнойра хирĕç пулаççĕ.

Миххал Ваççилђђă вăл çăмарта ертелĕн склатне пăхакан пуçлăх. Тепле çакланкаланă вара вăл вырăна.

Шурă квартейтсă, ĕлĕк офитсер пулнă, кулак ывăлĕ, 19-мĕш çулта тарса та çӳренĕ вăл. Халĕ те Совет влаçне ђĕререн кураймасŤ, анђах ун çинђен вăл Хĕлиппе çеç калаçаŤ, никама та пĕлмест. Ыттисен умĕнђе «Совет влаçĕшĕн ђунне пама хатĕр».

— Мана парттине те илесшĕн те, епĕ хам кĕместĕп—тет вăл çамрăксене.

Пайан вăл Хĕлип патне пынă. Те хăнана, те хĕрĕпе калаçма. Хветуç ытла та йуратаŤ ăна. Лешĕ «кађђа пыратни» тесен, пайанах пыма хатĕр, анђах Мишшă теммеваскамасŤ.

— Кампа тавлашрăн есĕ вăл тери?—шурă шăлĕсене кăтартса ыйтрĕ вăл Хĕлип пӳрте кĕрсенех.

— Ав, Тарас, çара пакарта. Хĕлле, çиме çук тесе йăлăнђĕ те, шеллесе хам патăмра ĕçлеттертĕм. Халђ кутăланса, укçа шыраса çӳрет—машлатаŤ Хĕлип сĕтел хушшине ларса. Тултарха ђей çĕнĕрен—терĕ вăл хĕрне.

— Мĕн калаçса тăмалли пур вĕсемпеле? Кутĕнђен тап та сиктер.

— Сута параn тесе хăратаŤ йурăхсăр...—терĕ Хĕлип ђей ђашкине йăвантарса.

## V.

Кăмака ђĕртме кусарпа хăйă ђĕрнĕ ђухне Верук амăшĕ пĕркун аллине шăйăрса йађĕ халĕ вăл шыçса кайнипе нимĕн те ĕçлеймест. Пиçнĕ çĕрулми те çыхса пăхаŤ, тата аптранă йенне хур çăвĕ те сĕрсе пăхаŤ (тĕрлĕ çын тĕрлĕ ăс параŤ, хăшĕ ку пулăшаŤ тет, тепри тата мĕн те пулин тупса калаŤ), мĕн кăна сĕрсе пăхмарĕ пулĕ,çук шыççи ђакмасŤ. Нимĕн те ĕçлейми пулђĕ йулашки вăхăтра унăн амăшĕ.

Ахалђ те килти ĕçрен пушанма çукђђĕ, халĕ ĕнтĕ, амăшĕ сывмырланнипе, мĕн пур ĕç Верук çине тийенђĕ.

Хĕрарăм ĕçĕ куçа курăнмасŤ вăл, анђах килçуртри вак-тĕвек ĕç вĕсене халтан йараŤ: апат хатĕрлесси,

тиркĕ-çăпала çăвасси, кăмака хутасси,—пĕр ĕç хыççăн тепри тухса пырать.

Пухура вара Иллепе курса калаçсан, килти ĕçпе муталанса кун иртнине те сисмест. «Хĕрарăмсем колхоса кĕме хăраççĕ»—шухăшлать вăл тепĕр ђухне тарăхса.— Хăйсене çăлăнăç парассине сисмеççĕ, вĕреннĕ ђăх пек кĕл ăшĕнђе ђакаланма. Е-е-ех! тĕттĕм хĕрарăмсем, ирĕке тухма хăраççĕ.

Пайан кĕпе те çунипе ытла та ывăнтарђĕ, ĕне суса кăларасси çеç йулђĕ ĕнтĕ, ĕç пĕтсен Илле патне кайма шухăшлать.

Тулта сума—пит сивĕ, ĕнене çавăнпа пўрте кĕртсе çăваççĕ. Ăшă вите пулсан, тулта та сума пулать те, çук вĕт, çавă пĕтерет. Çитменни касать.

— Хас! Хасс! Хытăрах ут, пўрте сивĕ кĕртетĕн, мур,—шăпăр хуллипе çапать вăл хыткан, ырхан, алăк урлă йерипен утса тухакан, ĕнине.—Хас! картана.

Карта алкне çыхса пусма çине хăпарђĕ çеç, алăк сасси пулђĕ.

— Епĕ хам та пырас тесе тăраттăм—кулса йађĕ вăл шурă шăлне кăтартса Праски кĕнине курсан.—Килти ĕçе нийепле пĕтерме çук. Айта пўрте.

— Пĕђђен çапла вĕт вăл, анђах ĕç тесе йалан пўртре лараймăн, урама та тухса курас пулать. Çамрăк ĕмĕр иккĕ килмест вăл—тет Праски хыçĕнђен пўрте кĕрсе.

Пўртре, урай варринђе, пысăк лаххан ларать, ун йĕри тавра йĕпе улăм тăкăннă,—пăтратни çинĕ ђухне ĕне сапаласа пĕтернĕ.

Верук лаханне кăмака çумне тĕртсе лартрĕ, урайне кивĕ милĕкпе шăлса кайрĕ. Праски уринђи йурне тасатрĕ те вĕри кăмака çумне тайăнса çурăмне ăшăтать.

— Пĕтри санăн пайан ĕçў?—ыйтрĕ вăл унтан хăйĕн çинçе сассипе.

— Пĕтрĕ. Урăх ĕç çук. Анне, манăн ĕç пĕтрĕ, каймалли пур—терĕ Верук кăмака çинҫе ахлатса выртакан амăшне.—Епĕ хăвăрт кайса килĕп.

— Ăçта çӳрен ку сивĕре?—ҫарат̆ ăна амăшĕ.

— Ҫасах таврăнатăп епĕ.

— Кай та пит нумай ан тăр.

— Ĕçке каймастăп вĕт епĕ нумай ларма—тавăрса каларĕ Верук кивĕ кĕрĕкне тăхăнса.

Çăварни çывхарса килет пулсан та, çанталăк пит сивĕ тăрат̆. Йур хытнă та, ура сасси таçта, инçете саланат̆. Питçăмартине вăрттăн сивĕ ҫĕпĕтет, çавăнпа Верукпа Праски пит васкаса утаççĕ.

Пралăкран пĕр çын тухрĕ, вĕсен патнелле васкаса пырат̆.

— Ăçта васкатăр?—кăшкăрҫĕ вăл çитнĕ-çитменех. Хĕрсем ҫарăнҫĕç, пăхаççĕ Тиххăн çине тĕлĕнсе. Çиленсе кăшкăрни таçтан паллă.

— Сана мĕне кирлĕ?—тесе хуҫĕ Праски.

Тиххăн вĕсен умнах пырса тăҫĕ, мăйаххи, тата куç харшисем унăн сивĕпе шап-шурă пулнă, куçĕсем выљаса тăраççĕ.

— Кай, çула пӳлсе ан тăр йупа пек!

— Ҫарăн! калаçмалли пур,—терĕ вăл Верука кĕрĕкĕнҫен тытса. Верук тĕлĕнсе пăхса тăрат̆.

— Мĕн калаçмалли пур вара?

— Вăт мĕскер. Хĕрарăмсене пăлхатма ҫарăнатни есĕ? Пуçна ан ывăт. Кăна куратни,—тăсрĕ вăл ун çăварĕ патне тукмак пек аллине.—Кăтартăп сана колхос!

— Хĕнеме тухрăни?..

— Çакланĕ те çав, капла хăтлансан—терĕ те, машлатса утрĕ анаталла.

Верукпа Праски васкаса утрĕç Иллесем патне.

Илле сĕтел хушшинҫе пуçне уснă та, шухăшласа ларат̆. Кулаксем ĕнер Љавана тытса хĕнени ăна тарăн

шухăша йанă. Хĕнекенсене тытса хупнă та, анђах йалта кулаксем тата пур, вĕсем темĕн те тума пултараççĕ. Хайшĕн пĕртте хăрамасť вăл, ыттисемшĕн те питех шикленмест, вĕсене парăнас çук, анђах хăш ђухне çапах та пуçа тарăн шухăшсем пырса кĕреççĕ.

— Малашне вĕсемпе урăхларах калаçмалла пулаť, хамăра тапăнма пуçларĕç, пире хăратасшăн, ђимха, кам кама хăратĕ—шухăшлаť вăл.—Кулаксене класĕпех пĕтерес тени тĕрĕсех, вĕсем пире канăç парас çук.

Вăл çапла шухăшласа ларнă ђухне Верукпа Праски пырса кĕђĕç. Вĕсем урамра Тиххăн каланă сăмахсене каласа парсан, вăл пўртре çиллине шăнараймасăр каллĕ-маллĕ уткаласа çўреме пуçларĕ.

— Йа-а-вăлсем, хăратасшăн пире! Пирĕн çула пўлесшĕн. Йурĕ. Курăпăр, — сăтăркалаť вăл кăтра çўçне.

Љавана хĕненисенне пуринпе те мĕн пур пурлăхне туртса илнĕ, халĕ ĕнтĕ ыттисенне, Тиххăн пеккисене таканлас пулаť.

— Есĕ ыран претçетаттĕл патне пыраймăна? —ыйтрĕ Верукран Илле ун çумне ларса.

— Çук, анне ĕçлеймест. Пушанма çук. Мĕншĕн вара?

— Пуйан Хĕлип патне, тата ыттисем патне те кайас тетпĕр. Рапођђисем хулана кайнăђђĕ, ыран кăнтăрла килеççĕ, çавсене çеç кĕтрĕм—тет Илле.—Вĕсемпе ĕçлеме аван.

— Анне йарсан килетĕп.

— Йурĕ. Праски есĕ тата?

— Епĕ те, Верук пырсан, пыратăп—терĕ Праски.

Çак кунсенђе вăл та малалла туртăнма пуçларĕ, вăл та ăçта аваннине сисрĕ. Телекаткăсен пухăвĕнђен пĕринђен те йулмасť.

Тепĕр кунне рапођђисем кăнтăрлана çитеймерĕç. Вăйлă тăман тухса çула пăснипе çĕрле çеç çиткелесе

ўкрĕç. Çавăнпа ывăннă, шăннă çынсене канăç парас тесе, кулаксем патне кайассине тата тепĕр куна хăвармалла пулђĕ.

Ђухăнсен пухăвĕнђе те, йалсоветĕнђе те кама раскулађђĕт тăвасси çинђен постановлени йышăннă ĕнтĕ, вăл постановленийе пурнăçа çеç кĕртес пулаť.

Ђи пуйан кулаксем йалта çиђђĕнђђĕ, виççĕшĕ тĕрмера лараççĕ, пĕр-икĕ ернерен сут пулмалла вĕсене. Пуйан Хĕлипе (ăна ĕлĕкренпех çапла ђĕнеççĕ, ĕлĕкех çĕрме пуйан пулнă вĕсем), Çитăр Раманне, Тиххăна, тата Мĕкĕтене раскулађђĕт тумалла. Вĕсем ĕлĕк уђђаскăра пурăнса, çын вăйĕпе çав тери пуйнă. Çавсем ĕнтĕ, йалти ђухăнсем колхос уçас тесе шухăш тытсан, халăха пăтратма тытăнђĕç, çавсем ĕнтĕ ђухăнсене çисе йарас пек тăраççĕ.

Ђи малтан прикатирсемпе йалти ђухăнсем Çитăр Раманĕ патне кайрĕç, унăн 260 пăт пытарнă тырă тупрĕç. Арпалăх айне пытарса хунă.

— Тырă манăн хама çимелĕх те çук—тет вăл малтан, аллисене саркаласа.—Ытлашши тырă çук манăн.

— Ну халђ мĕн калăн?—ыйтрĕ унтан Илле, çав пытарнă тыррине тупсан.

Нимĕн те ђĕнмерĕ Раман, пуçне лаш усрĕ те, малти пўртне кĕрсе кайрĕ. Унăн мĕн пур пурлăхне туртса илмелле турĕç.

Хĕлипĕнне те мĕнпур выљăх-ђĕрлĕхне колхоса илсе хăйне йалтан хăваласа йамалла турĕç, мĕншĕн тесен вĕсем колхоса хирĕç тăнă, Совет влаçĕ çинђен темĕн те пĕр калаçса çўренĕ. Тиххăнăн нумай пулмасť туса ĕлкĕртнĕ çĕнĕ çуртне колхос кĕнђелер тума туртса илђĕç. Çапла кирлĕ вĕсене—терĕç йалти ђухăнсем, кăна илтсен,—нумай тарăхтарђĕç вĕсем пире. Çапла кирлĕ.

— Вăхăтра килеймерĕм—терĕ Верук халăх йулашки çурта кĕрсен Илле патне пырса.—Анне сывалаймасť, алли пĕрене пек шыçса кайнă.

— Вăт çавăнпек та колхоса ђасрах уçма тăрăшас пулаť, унта хĕрарăмсене те ĕçлеме çăмăл пулĕ — тесе çурăмĕнђен саврĕ ăна Илле.

## VI.

Каç пулса килет (хĕлле кун кĕске вĕт вăл), йалсовет претçетаттĕлĕ—Ентри халĕ те таврăнманха. Илле ăна ирех, устава çирĕплетнипе çирĕплетменнине пĕлме, райĕçтăвнома йанă. Малтан хăйех каймаллаччĕ шутланăђђĕ те, Љава ăна пысăк ĕç хушнипе кайаймарĕ, çавăнпа Ентрийе йамалла пулђĕ.

— Манăн унсăр пуçне те каймалли пурђђĕха, кайса килĕп—терĕ вăл кађака сухалĕ пек вĕçлĕ, сарă сухалне сăтăркаласа.—Налуксене авантарах тишкĕрсе тухмалла.

Кайрĕ те çухалђĕ. Хăш вăхăтра сыпкалама та йураťаť. «Сивĕре йураť вăл» тет те, кĕрсе илсе тухатех. Ăна темиçе хут та йатланă уншăн, анђах ĕçсе ӳсĕрĕлсе тем хăтланса çӳременнипе, хăй ĕçне пĕлсе ĕçленипе, ăна вырăнтан кăлармаççĕ.

— Урăх ĕçместĕп, мура, пăрахрăм—терĕ вăл нумай пулмасť. Унтан вара ĕçни курăнмарĕ те, малашне темле пулаť.

Илле комсомолĕссен пухăвĕнђе пысăк токлат тунă хыççăн, халĕ килне таврăнса ларнă та, Ентри вăхăтра таврăнманнипе пăшăрханса лараť. Çийесси килет— амăшĕ таçта тухса кайнă.

Пăлтăрта сасăсем илтĕнеççĕ, çавă пулĕ, хĕрарăм сасси.

Алăк йар уçăлса кайрĕ те, амăшпе кӳршĕ арăмĕ, хăрах куçлă Марине çăмха пек кусса, тавлашса кĕђĕç.

— Илсе кайнă ђухнех çĕмрĕк пулнă вăл санăн. Епĕ, çĕмĕрмен, турăшăн вăттăн çĕмĕрмен — хурами пек какăлтатаť Марине.

Амăшĕ аллинђе çурăк ђўлмек, ăна вăл çавăркаласа пăхаť, тепре Марине çине çилĕллĕ куçĕсемпе пăхса илет.

— Намăссăр—йатлаť вăл куççене мăђ-мăђ хупкаласа тăракан Маринене—ку иккенне пĕлнĕ пулсан, парса та йаман пулăттăм. Тунаťха тата, кĕçсе пит! Ťфу!

— Епĕ çĕмĕрмен йапалана, çĕмĕрнĕ тесе, айăпне хам çине йепле илес? Вăт калаçрĕ. Парса йанă ђухнех, çапла вăл,—пăркаланаť Марине.

Илле ђарăнĕçи, ђарăнĕç-и тесе пăхса тăђĕ те, ђăтаймарĕ. Ентри килменнни—пĕрре, çийес килни—иккĕ, тата кăсем 20—25 пус тăракан çук ђўлмекшĕн çапăçас пек вăрçса пуçа çавăраççĕ.

— Ђарăнатри есĕр пайан, йе тытăнса ўксе çапăçма шухăшлатăри?—пырса тăђĕ вăл вĕсен хушшине.—Çук ђўлмекшĕн сынна култаратăр.

— Вара, сана калама çапла-а! Есĕ мĕн, мана ђўлмек илсе паратним?

— Йармăркара пилĕк ђўлмек илсе парăп.

— Кĕтха сана. Илсе парăн есĕ. Пайан кирлĕçке Йармăркађђен ăçтан илĕн?—пырса тăђĕ амăшĕ.—Есĕ тăрăннă кĕнекў çине те, нимĕн те пĕлместĕн. Сан пирки мана çынсем вăрçма пуçларĕç. Ларасђĕ кутна пусса тĕк кăна. Пĕтĕм йал сан çинђен калаçаť.

— Пĕлетĕп епĕ ăна, йуратнă аннем, аван пĕлетĕп. Кулаксем вăрçаççĕ мана, ђухăнсем пулăшу кĕтеççĕ.

— Ђухăнсем, ђухăнсем, епĕр хамăр та ђухăн, хамăр килçурта авантарах астăвас пулаť. Вăт мĕскер!—тутисене пĕрсе хуђĕ амăшĕ.

— Ех, ăнланаймастăр-çке есĕр!... Виçĕмкун «Ирĕклĕх» комунне кайса килтĕм. Вăт пурăнма пĕлеççĕ! Сирĕн пек çурăк ђулмекшĕн çапăçас пек тавлашмаççĕ.

Марине кулкаласа:

— Ан калаç, тархасшăн, Илле шăллăм, ан мухта, пĕлетпĕр.

— Мĕн пĕлетĕр вара?

— Выçлăн-тутлăн пурăнкалаççĕ. Кайса курмасăрах пĕлетпĕр. Куракансем пулнă.

— Çук, Марине инке, сирĕн пек выçлăн-тутлăн пурăнмаççĕ вĕсем. Малтан кайса курас пулаť, унтан тин калаçас пулаť. Пĕлмесĕр мĕн калаçмалли пур?—хĕрсе кайрĕ Илле.—Пĕлместĕр есĕр нимĕн те, çынсем суйа сăмах каланине çеç илтнĕ. Курайман çынсем темĕн те калĕç вĕсем... Епĕ йури кайса куртăм... Ытарма çук вĕсен пурнăçне... Пĕрлешсе ĕçлеççĕ, ĕç пĕтсен клупа пуçтарăнса лараççĕ те, кĕнеке хаçатсем вулаççĕ, пĕрпĕринпе йĕркеллĕн калаçаççĕ, çамрăксем çпектаккăҫ лартаççĕ. Кунта килнĕренпе, Хĕрлĕ çартан килнĕренпе аптăрарăм шатах, ним тума пĕлместĕп. Ха колхос уçатпăр, вăл ĕç пулмасан, вăл шанҫăк пулмасан, епĕ кунта тем парсан та тăрас çук. Тепĕр хут, хам ирĕкпе, йăлăнса, Хĕрлĕ çара каймалла. Есĕр, мĕске-е-ер пурнатăр?

Амăшĕ ун сăмахĕсене урăхла ăнланҫĕ пулас, хурлăхлă, хĕрелнĕ куçĕсемпе тилмĕрсе пăхса тăраť ывăлĕ çине.

— Манпа пурăнса йăлăхтарҫĕ те пулаťи?—ҫĕтрекен сассипе йĕрес пек каларĕ вăл, куçне йăвалакаласа.

— Унпа мар епĕ, анне,—терĕ вăл амăшĕ ăна ăнланманнине сиссе—есĕ пĕртте йăлăхтарман мана, капла пурăнма пултараймастăп епĕ хаҫ. Çĕнĕлле пурнас пулаť, йĕркеллĕ пурнăç тăвас килет. Тискер кайăксем пек, харкам хăйшĕн çеç шухăшлама пăрахас пулаť. Ăнланма вăхăт ĕнтĕ. Акă колхос уçсан мĕнле пурăнсан аваннине хăвăрах курăр.

— Ĕлĕк наҫар пурăнним?—пуçне пăрса хуҫĕ Марине.

Илле вăл йěкěлтесе каланине аван туйрě, ăна хирěç нимěн калас та мари терě те, анђах пуçне килнě шухăшěпе паллаштарас терě вěсене.

— Мěнтен аван пурăннă вара?—терě вăл Маринене хирěç кутнек çине ларса.—Ěлěкренпех сирěн çийěрте çак çěтěк сăхман, хěлě-çăвěпе канмасăр лаша пек ěçлетěр, анђах çапах та, ěçленě тыррăр хăвăра çиме çитмест, мěншěн тесен çěре ěçлеме пěлес пулать. Е-е-х, мěн калама-а-а! Кашни хăй анйне çийелтен хăли-хали сухалать те, вара—ни улăмě, ни тырри. Машшин кирлě, пěрлешӳ кирлě... Вăйăм çитсен тем тăвăттăм, пайанах мěн пурне ертеле пěрлештерсе, йěркеллě ěçлеме вěрентěттěм. Хаљиђђен йалта вуламалли çурт уçайман. Пăхăр, çамрăксем каçхине мěн ěçлеççě? Уллахсем тăрăх, ахăлтатса, алхасса çӳреççě. Ах, ха-ха, хи-хи-хи, çавă çеç вěт. Ђиркӳпе пупшăн мěн ђул расхут кăларатăр хăвăр, хаљиђђен вуламалли çурт уçайман. Турă çинђе сирěн шанђăк. Çук, хăвăн ěçлемешкěн вěренме тăрăшас пулать, вăт мěскер!... Ну, сирěнпе калаçса кунта, вěçнехěрне тухаймăн. Çийес килет манăн, апат парха есě анне, çукшăн нăшăклатса ан тăр. Куçу ахаљ те нађар...

Иллене апат антарса парсан, амăшě Маринене ăсатма тухса кайрě.

— Асту, илсе килме ан ман вара, ман урăх ђӳлмек çук—илтěнђě Иллене амăшě сасси пăлтăртан.

Апат çисе тăрансан, Илле ăш вăрканипе Љђава патне кайас тесе тумланма çеç тытăннăђě, Ентри васкаса пырса та кěђě.

— Ташла Илле—терě вăл кěрсенех кулкаласа—ташла! ěç хута кайрě.

Ентрин кулакан куçěсене пăхсанах Илле райěçтăвкомра вěсен уставне çирěплетнине, тата пулăшу пулассине сисрě.

— Ăçта, кӳрха кăтарт хутна?

— Ме вула — кăларса паҙĕ хĕвинҙен сарă паккет Ентри.—Пурне те çырнă унта. Вăт есĕ мана тăрăшмастăп тесе ҙуна ерлентеретĕн, куратни?

Илле райĕçтăвкомран килнĕ хута васкаса вуласа тухрĕ те, Ентри çумне пырса ларҙĕ.

— Çиллĕм килнĕ вăхăтра çеç каланă епĕ сана, ан çилен, кўр аллăна. Малалла иксĕмĕр çанна таварса ĕçлĕпĕр. Есĕ ташла тетĕн. Ташлама иртерехха Ентри пиҙҙе. Иртерех. Малта пит пысăк ĕçсем тăраççĕ. Устава йышăнни пĕр утăм та мар, çур утăм çеçха вăл. Акă колхоса органисатсилесен, унта ĕçе, пурнăçа йĕркелетсен, кайран, тепĕр кĕркунне ташласан та йурать вара. Унта ташлăпăр. Хаљ ĕçлес пулать. Çур йал çырăннă, тăруках нумайшăн тăрăшни усăллă пулмĕ. Малтан ĕçпе кăтартас. Çапла-и? Мĕн пуçна ҙиксе ларатăн, ҙорт? — тесе çурăмĕнҙен çапрĕ ăна шўт туса Илле.

— Хитре калаçатăн есĕ Илле, ĕçлеме те пултаратăн, Хĕрлĕ çар çын турĕ сана. Астăватăни ĕлĕк йепле çўреттĕн? Ни-то, ни-çо. Хут пĕлместĕнҙҙĕ. Хаљ сана пыр та кур—çавăн çинҙен шухăша кайрăм. Ывăнтăм та пулас—терĕ вăл ура çине тăрса.

— Ĕлĕк, ĕлĕкхи иртрĕ ĕнтĕ вăл. Аса илсен хам та вăтанатăп, пит тĕттĕм пулнă... Ну райĕçтăвкомра тата мĕн каларĕç?

— Çураки ваљљи, акакан машшинсем парăпăрах терĕç. Вырмалли машшинсем çинҙен кайран калаçăпăр терĕç. Ҙи аслипе хам калаçрăм. Мухтать пирĕн ĕçе. Ҙимха,—пушта кĕрсе тухрăм, сана ваљљи хаçат-шурналсем пур унта—терĕ вăл кушилне салтса.—Акă ме. Ну епĕ кайрăм, сывă пул, хырăм выçрĕ.

— Љавана кĕрсе систер—тесе çеç йулҙĕ Илле, унтан «Канаш» хаçат вулама тытăнҙĕ. Çур хаçата колхос ыйтăвĕ çинҙен çырнă. Колхос тăвас ĕç мĕнле вырăн йышăнса тăни çавăнтанах паллă ĕнтĕ. Ку йалта колхос

тунă, тепĕр йалта йалĕпех сырăннă, тепĕр çĕрте тата кулаксем ĕçе ђарнă... Çавăн çинђен çырнă хаçатра. Акă пĕр йалта тата кулаксем пĕр активиса персе вĕлернĕ.

— Кĕме йурати?—хăлхана кĕђĕ пĕр сасă.

Илле алăк патне çаврăнса пăхрĕ, алăк умĕнђе Карађăм тăрат̆. Пухура пуринђен ытла çавă кăшкăрашаканни. Иртнĕ пухура çеç вăл çукђђĕ, хулана кайнă пулнă.

— Алăка кĕме каснă, килме йурат̆. Мĕн ĕçпе?—тӳрех ыйтрĕ унтан Илле.

— Хаљхи вăхăтра пĕрпĕрин патне çӳреме те хăрушă.

— Нађар вăхăт çитрĕим сирĕншĕн?

— Малтанах хирĕçле ан калаçха есĕ, Илле—йăвашшăн, ђейепе калат̆ Карађăм.

— Сирĕнпе пирĕн мĕн калаçмалли пур вара?

— Йал çыннин пĕрпĕринпе калаçмалли пулатех ĕнтĕ вăл. Епĕ тĕрĕк çынни мар пулĕ,—тет Карађăм.

— Тĕрĕксем те тĕрлисем пулаççĕ, сирĕн пеккисем те пур, пирĕн пек ђухăнсем те нумай. Кашнинпе урăхла калаçатпăр епĕр—тесе татса хуђĕ Илле.

Хаçат çинђе те кулаксем хăшпĕр тĕлте йалти активиссене тапăни çинђен вуланине аса илсен, Илле тата ытларах курайми пулђĕ. Мĕншĕн килнĕ ку?—шухăшлат̆ вăл.—Мĕн ĕçлесе тăрат̆ тухса каймасăр?

Карађăм тухса кайма мар, вăрăм сакă çине урине тепĕр ури çине хурса ђĕлĕм тивертсе йађĕ. Пикенсех калаçма килнĕ.

— Ђухăнпа пуйанне пăрахха есĕ,—терĕ вăл ђĕлĕмне пăклаттарса.—Пирĕн пуйанлăхĕ мĕн. Есĕр пиртен мĕнтен кайа пурнатăр?

Иллен çилли тулнипе пырне темĕн пырса тăкăлђĕ

— Мăшкăлама килтĕни есĕ? Кала тӳррипе?

— Мăшкăлама мариç. Çавна çеç каласшăн. Хаљ пуйане те, ђухăнĕ те пĕр пекех. Укçапа та нимĕн илме çук.

— Хм. Есĕ çапла калассине епĕ малтанах сисрĕм. Тавар çук тесшĕн ĕнтĕ есĕ. Пусма тавар çук, ђей-сахăр çителĕклĕ мар, вăл çук, ку çук тесшĕн? Çаплаи?

Илле сĕтел хушшине кайса ларђĕ те, аллине хаçат тытрĕ.

— Ун çинђен калаçмăпăрха епĕр. Вăт мĕскер.

— Ну!—пăхрĕ хаçат çийĕнђен Илле.

— Мĕн урлă пăхатăн есĕ ман çине.

— Тăрăх пăхăпăр еппин. Ну!

— Санпа калаçма та хăрушă. Вăт мĕнле — пуçласа яђĕ вăл хăйĕн тĕп шухăшне. Мм. Хĕлип санпа калаçасшăн. Сана пулăшма хатĕр вăл.

Иллене ку мăшкăланăнах туйăнђĕ, çилли килнипе вăл ун патнелле утрĕ.

— Ĕнсӳнтен парса кăлариђђен, лайăхлăхпа тухса кай кунтан Карађăм!—кăшкăрса пăрахрĕ йулашкинђен Илле хытă сасăпа.—Марш кунтан! Илтетни?

— Епĕ çавна çеç каласшăнђĕ...

— Тух! Йавкаланса ан çӳре çĕлен пек.

— Ђипер калаç есĕ Илле шăллăм, ђипер калаç, епĕ санран ватăрах пулĕ.

— Йепле ђипер калаçаççĕши вара? Епĕр сирĕнпе урăхла калаçма вĕренмен.

Карађăм нумайђђен пĕр ђĕнмесĕр пăхса тăђĕ ăна, унтан çĕлĕкне лаш пусса тăхăнђĕ те, урайне лаçлаттарса сурђĕ.

— Сирĕнпе-е! Сирĕнпе-е! мĕн тунă вара епĕр сире? Ытлашши калаçатăн, ӳкĕнмелле ан пултăр—терĕ те алăка хытă хупса тухса кайрĕ.

— Сволăђ, çĕлен пек ђейе пуласшăн.

Амăшĕ пырса кĕђĕ. Хура сăкманĕ йурпа шапшур пулнă.

— Йур çăватим?

— Йур çума пуçларĕ. Ăшăтса йађĕ.

— Ну, ман каймалли пурха, тес тухса кайрĕ Илле урамалла.

Пĕлĕте йур пĕлĕҫĕ хупласа илнĕ. Хĕвел аннă пулсан та çапçутă, хаљ çеç çунă шурă йур çутатаĭ çанталăка. Тĕк пек çăмăл, çўпçўхе йур пĕрҫисем çаврăнкаласа çĕре персе анаççĕ. Çăлтăрсем курăнмаççĕ, пĕлĕт хуплана вĕсене. Илле Веруксен çурҫĕ патнелле васкаса утаĭ. Ăна каласа савăнтарас та, Љава патне кайас шухăш унăн.

---

Илле тухса кайсанах амăшĕ сĕтел çинҫен тиркĕ-çапала пуçтарҫĕ те, пит тарăн шухăша кайрĕ: «Мĕн кирлĕши ĕнтĕ ку Иллене? Мĕншĕн çав тери тăрăшаĭши çав колхосшăн? Авланасҫĕ те, пурнасҫĕ ытти çынсем пек лăпкă. Акă пăру ўссе çитĕнет, ĕне пулаĭ, лаша ватăрах та, кайран, алă çаврăнсан ăна улăштарма та йураĭ. Аҫапăҫа пĕр ўссе çитсен ашшĕ-амăшне питех итлемест çавă»—шухăшлаĭ вăл тăвăр çамкине пĕркелесе.

Лишентсă хĕрарăмĕсем тăваттăн пăлтăртанах йанраса кăшкăрса пырса кĕҫĕç.

— Çавсем Љавапа иккĕшĕ пĕтĕм йала пăтратаççĕ, çавсене шăлĕсене пĕçертмелле — ахăрашаĭ Хĕлип арăмĕ—амăшĕ лараĭ, хăй çук. Ăçта, мура, кайнăха вăл?—пырса тăҫĕç ун патне тăваттăшĕ те. — Ăçта пытартăн аҫуна? Пўтсĕр аҫуна?

— Çавсем ҫиркĕве хуптарасшăн, пупа хулана тытса йарасшăн, намăссăрсем — сулкалаĭ Караҫăмăн сулă тăхăннă арăмĕ.

— Ларăр. Мĕн урнă пек ахăрашатăрха есĕр? Ăçта кайасса вăл мана каласа каймасĭ. Ĕçпе кайап терĕ.

— Астăвăрха, йепле ывăлĕ хутне кĕрет. Çавăрса илсе тўмккемелле пит лайăх кăна, ывăлĕ вырăнне.

— Есĕр мана наçмих тума килнĕи вара? — вĕсем патнелле утса пыҫĕ Илле амăшĕ.—Хам килте хама хĕ-

несе хăварашшăниха есĕр? Кам ирĕк паҙĕ сирĕ? Тухăр кунтан, капла калаçатăр пулсан. Тухăр! тенĕ сире.

— Тупса пар аҙуна.

— Тухăр кунтан!—тата хытă кăшкăрҙĕ Илле амăшĕ.

— Сан ывăлу пире ҙиркӳсĕр, пупсăр хăварасшăн. Ĕмĕтсĕр вăл. Хăйсен пурлăхĕ çук та, çынсенне ăмсанса çӳрет, на-а-вус. Пĕрлешме-е кирлĕ! Колхо-ос уçас! манка сурăх. Кăтартмалла ăна колхос.—тĕпĕртетет ĕлĕк усламçă пулнă Микулай арăмĕ.

— Ытлашши ан калаçсам Тарук, сан ывăлу пек хăрах куçлă мар вăл манăн Илле, ҙăлах мар. Хĕрлĕ çара кайма йурăхлă пулҙĕ, унта кумантир пулнă вăл. Çуратса курман есĕ ун пек ывăл, нихçан çуратас та çук—çилли килнипе пĕр йеннелле пăрса кăшкăрҙĕ Клавйе.

— Пăхăрха есĕр ăна, аҙи хутнех кĕрет, ывăлнех хӳтĕлет—пĕр вырăнта тăраймасӑ Хĕлип арăмĕ.

Çав вăхăтра уҙиттĕл пырса кĕҙĕ. Пит васкаса килнĕ пулас, хăвăрт çывлаӑ, куçĕсемпе такама шыраӑ.

— Илле ăçта кайнă?—ыйтрĕ вăл йăвашшăн Клавйерен—Паçăр килтĕм, ун ҙухне тĕл пулаймарăм.

Клавйе ăна пĕр сăмах та каласа ĕлкĕреймерĕ, ытти хĕрарăмсем сăпса пек сырăнса илҙĕç.

— Епĕр та çавна шырама килтĕмĕр,—кукăр пӳрнеллĕ аллине тăскалаӑ Тарук—таçта пытаннă пиҙĕ çине сурасскер. Намăссăр!

Уҙиттĕл вĕсен çине вăраххăн пăхса илҙĕ те, пуçне сулкалаӑ. Хĕрарăмсем темĕскер пулнă пек, тĕпĕртетеççĕ анҙах.

— Ан шавлăр, ҙорт воçми,—кăшкăрса пăрахрĕ вăл вĕсене,—Клавйе инкепе калаçма парăр. Илле ăçта кайнă?—ыйтрĕ вăл Клавйерен.

— Ĕç пур терĕ, ĕçрен пушанаймасӑ вăл, хăвăр та пĕлетĕр.

— Ăхă. Ђава патĕнђе пулас. Пайан опăска каймалла, çавăнпа килсеттĕм ун патне.

— Хам та аптăранă ĕнтĕ унпала, ун пирки мĕн ђул сăмах тивет мана.... Нумай пулмасть таçта тухса кайрĕ. Ђас ан кĕт, ĕç нумай—тесе аллине сулса хăварђĕ.

— А-а, çавăнпа кайнă пулĕ—аса илђĕ вăл. Тухса кайма тытăннăђђĕ, хĕрарăмсем шавланипе ђарăнђĕ.

— Сире мĕн кирлĕ пулђĕ? Мĕн тĕпĕртететĕр?

— Ђиркĕве хуптарасшăн, пупа хулана илсе каймалла теççĕ—пурте харăс каласа хуђĕç. Вăт мĕн хăтланаççĕ!

— Пĕлмесĕр мĕн супĕлтететĕр. Кам каларĕ сире?

— Пађăшка хăй каларĕ, вăл суйас çук.

— Пупран ытла кам суйаканни пур тата. Хăçантанпа суйса, улталаса пурăнать сире. Есĕр çавна сисместĕр—терĕ вăл вĕсене—кирлĕ пулсан ђиркӳне те хупăпăр, пупне те ăса кĕртĕпĕр, анђах халђ ăна ђерет çитмен-ха. Опăскă мĕн кăтартĕ.

— Ха, ха, есĕ те Илле майлă. Сана та кирлĕ. Вăт ăна уђиттĕл те: минкернĕ сурăх пек пĕр вырăнта çавăркалать, Ťарук—астăвăр, мĕн калаçма пуçларĕ. Вăл та, вĕсен майлă.

— Епĕ тĕрĕслĕх майлă. Ђимĕр-ха, ђимĕр, ан шавлăр. Пĕлмесĕр калаçмаççĕ ăна.

— Есĕ пĕлен, вĕреннĕ çын вĕт есĕ—тутине пĕрсе хуђĕ Хĕлип арăмĕ.

— Епĕр тĕттĕм—куçне çавăркаларĕ Ťарук.—Вĕсем кăна пурнăçа пĕлеççĕ. Епĕр мĕскер, епĕр çамрăк вĕтха!—тăрăхлать вăл ăшĕнђе вăрттăн кулса.

Сĕтел умĕнђе Клавйе пуçне ђиксе тăрать, пысăк шухăша кайнă вăл. Уђиттĕл пит шеллерĕ ăна, çавăнпа та ăна вăрçма пынă хĕрарăмсем темрен те усал курăнђĕç ун куçне.

— Тĕттĕм çав—пуçласа йађĕ вăл вĕсен патнерех пырса, çав хуплать сире. Сирĕн пуçăрта ăн йулман, кăшт

йулнă пулсан, капла та хăтланмастăр есĕр. Тĕн сĕрĕмĕ хупласа илнĕ сирĕн пуçăра.

— Астуха, куç умĕнђех мăшкăлатăç.

— Мăшкăласа мар. Ан кăшкăрăр. Итлĕр епĕ калание. Кашни çын хăйшĕн ответ тытаť. Пуп та пирĕн пек çынах, çуçĕ кăна вăрăм унăн.

— Сирĕн пек йурăхсăр мар вăл— малалла тухрĕ Ťарук.

— Ну йурĕ, ан тив, вăл турăллă пултăр. Икçĕр метăр пусма, тата çĕр хĕрĕх пăт тырă турăшăн хатĕрленĕ тейĕпĕр, çапла пултăр, анђах ăна та ытлашши каласма хушмаççĕ. Мĕн каласа хăратрĕ вăл сире? Тĕнђе пĕтет терĕи?

— Есĕр капла хăтлансан пĕтĕ те çав. Есĕ те Илле майлă.

— Илле тĕрĕслĕхшĕн тăрăшаť. Ђухăнсем те йĕркеллĕ пурнасшăн, анђах йал пуйанĕсем пурăнма памаççĕ.

— Пурăнђђăр, кам ђараť вĕсене' Ђаракан çук.

— Кунта килсе вăрçма сире кам ирĕк пађĕ?

— Вĕсене çын тыррине илме кам ирĕк панă вара еппин.

— Камсемшĕн тăрăшаť сирĕн пупăр? Кулаксем майлă, сирĕн пеккисем майлă, колхос уçма ђараť. Малашне те хресђенсен ĕнси çинђе пурнасшăн, çитĕ кун ђул пурăнни те çитĕ, малашне апла пурнаймĕç. Пупсем улталанине нумайĕшĕ сисрĕç ĕнтĕ, терĕ вăл хытă сасăпа Куђуç йеннелле пăхса.—Куçа уçас пулаť, лайăх пурнăça турă памасť, ăна хамăр тума тăрăшас пулаť. Илле çавăншăн тăрăшаť, акă Тарука илер, паллах сана колхос кирлĕ мар, есĕр пуйан, ђухăнсен çĕрне тара илсе, акса пуйрăр. Ђухăнсем пĕрлешсе çĕнĕ, илемлĕ пурнăç тума тăрăшаççĕ. Куђуç акă пуйан хĕрарăмсем хыççăн кайса, хăй мĕн тунине хăй те пĕлмест, мĕншĕн тесен ђухăнпа вăтам хресђенсене колхос çеç çăлăнăç пама пултараť.

— Есĕр тăвăр ĕнтĕ Иллепе.

— Тăватпăр! тăрăшсан тума пулаӑ. Епĕр иккĕн çеç мар, пĕтĕм халăх пирĕнпе. Вăтам хресҫенсем те пирĕнпе. Есĕр вăт, пуйан арăмсем, пирĕн ĕçе ҫарасшăн. Есĕр пурте пупсемпе пĕр сăмахра. Кайран хăвăрах ăçта аванне сисĕр те, хăвăрах колхоса илме ыйтăр та.... Ну ман каймалла, сывă пул Клавйе инке—тесе васкаса тухса кайрĕ уҫиттĕл.

— Кунта тăрса пулмаӑ, кайар—терĕ Хĕлип арăмĕ. —Вăл çĕрлесĕр те килес çук. Айтăр!

Вĕсем тухса кайсан Клавйе нумайҫҫен шухăшласа ларҫĕ.

— Вăт пăлханаççĕ, вăт хирĕлеççĕ—тет Илле амăшĕ кĕнҫеле арлама ларса.—Çурхи шыв пек кĕрлеççĕ, тем пулнă халăха.

## VII.

Çăварни иртсен çанталăк пит ăшăтса йаҫĕ. Кунĕнçĕрĕн тĕтре. Хĕвел хĕртни палăрмаӑ пулсан та, йур кăвакарса кайрĕ, вырăнĕ-вырăнĕпе хуралнă сăртран çул çине пăхсан, вăл хура çĕлен пек кукăр-макăр тăсăлса пит инçетрен курăнса выртаӑ. Пĕр кунхине ăшă çăмăр çума пуçларĕ, ун хыççăн йур тата ытларах хуралса йулҫĕ. Лупас çинҫен ирпе тумла, йухаӑ, каçхине пăр пулса хытса лараӑ. Çуркунне çывхарса килни пурне те сисĕнтерет.

«Урапана хĕл кунĕ хатĕрле» тенĕ пек, çураки хатĕрĕсене те вăхăтра йусаса хурас пулаӑ.

Колхоса мĕн пурĕ 47 килĕ çырăннă, 21 лаша пур, 23 ĕне, 11 плук, 12 сӳре, вĕсенҫен виççĕшĕ тимĕр сӳре, тата кулакран туртса илнĕ тырă выракан машшин. 110 кектар çĕре çак хатĕрсемпе ĕçлеттермелле: сухаламалла, сӳрелемелле, акмалла. Районтан акмалли машшинсем—2—3, тата 4—5 плук парас теççĕ, илсе килменха. Акмал-

ли машшинсем питех нумай кирлӗ марҫке вӑл, анҫах плук ҫителӗклӗ мар.

Малтан колхоса 66 килӗ ҫыраннӑҫҫӗ, плук ҫирӗмрен те иртнӗҫҫӗ, 32 лашаҫҫӗ, анҫах кулаксем сӑмахӗнҫен иртеймесӗр, 19 ҫемйе-лашаллӑ, ӗнеллӗ вӑтам хресҫенсем, ыттисенҫен пурлӑхлӑраххисем пӗрерӗн-икшерӗнех кайалла тухса пӗтрӗҫ. Хӑшӗ колхосра турра ӗненме ҫараҫҫӗ тесе, хӑшӗн арӑмӗсем вӑрҫӑҫҫӗ имӗш, теприсем «епӗр ватӑ, ӗҫлеме пултараймастпӑр» тесе калле тухрӗҫ. Тухас текенсене колхос правленийӗ пӗртте ҫарса тӑман.

Лҫава хӑшне-пӗрне ӳкӗтлеме тытӑнҫҫӗ.

— Мӗншӗн тухан? Мӗнтен хӑран?—ыйтаҫҫӗ вӗсенҫен.

— Ҫарӑн, тархасшӑн, пустуйа калаҫма, каласа ӑнлартнӑ вӗсене, каламан мар—сулаӗ Илле аллине—тухас текенсем тухҫӑрах. Хайсемех кайран, епӗр ӗҫе майласан, ҫӗнӗрен ҫырӑнасшӑн пулӗҫ.

Комсомол йаҫейкки ҫекреттарӗ Кавруҫ та, хӑшӗ пӗри тухас тесе калаҫсанах пуҫне хыҫма тытӑнаӗ вара. Тӑрӑшни харама кайнӑ пек туйӑнаӗ ӑна, ҫленсен шуҫӗ ҫаксан. Илле ҫас-ҫасах йатланӑ ӑна.

— Мӗн пӑшӑрхананха уншӑн есӗ. 47 килтен мар, 17 ҫемйерен колхос тӑваҫҫӗ хӑшпӗр йалта, кайран вара ӳснӗҫемӗн ӳссе пыраӗ. Пирӗн малтан хресҫенсене ӑҫта аваннине ӗҫпе кӑтартас пулаӗ, шуҫӗ вӑл капла та ҫителӗклӗ—теҫҫӗ ӑна Илле.

Кавруҫ ун сӑмахӗпе килӗшесшӗн мар, хӑйӗннех перет.

— Самӑй лашаллисем тухаҫҫӗ вӗтха, ҫӗре мӗнпе ӗҫлеттерӗпӗр?—ыйтаӗ вӑл.

— Лашасемпех ӗҫлеттерӗпӗр. Тепӗр ҫул трактӑр туйанӑпӑр.

— Кӗтсе тӑр, парӗҫ трактӑр. Хатӗрлесех хунӑ пирӗншӗн.

— Çынсем хатĕрлемесен, хамăр хатĕрлĕпĕр, анасене акмасăр хăварма памăпăр. Пуçа усас пулмасӗ. Кашни ĕçех поӆшевикла тăвас пулаӗ. Е-е-е-х ты, енттуçиас.

Çапла ӆас-ӆасах калаçаӆӆĕç пĕр-пĕринпе.

...Вăхăт хăйĕннех астăваӗ вăл, çывăрмасӗ. Çуркунне çитрĕ. Урамра кĕрлесе шыв йухаӗ. Йур искĕлнĕçемĕн искĕлет.

Пĕр кунхине Иллене райĕçтăвкома ӆĕнтерӆĕç. Икĕ кун пурăнса килӆĕ унта Илле.

— Ну аван хыпар илсе килтĕм сире—терĕ вăл таврăнсан ӆленсене пухса.

— Мĕнле хыпар?

— Пире ăратлă вăкăр параççĕ, лайăх суртлă вăрлăх, тата кĕтмелле тăватă плук паӆĕç.

— Ну-у! Ӆăнах-и?—харах кăшкăрса йаӆĕç ӆленсем савăннипе.

— Суйеçтерсе тăмăп тата сире.

— Ну çпаççипа сана, Илле, пирĕншĕн тăрăшнăшăн —мухтаӗ ăна Тарас.

— Вăрлăх çитмест тесе пит хуйхăраттăм. Капла ĕнтĕ аптăрамастпăр. Анасене хурана хăвармастпăр. Совет влаçĕ хамăр влаç çав вăл. Пире мĕн кирлине пĕлет, мĕн вăй çитнĕ таран пулăшма тăрăшаӗ. Ну çпаççипă турра.

— Сана тура пулăшрĕим?—тесе ахăлтатса кулса йаӆĕ комсомолĕс Мĕтри—йе райĕçтăвкома çук турă вырăнне хуратни? Ха-ха-ха! Есĕ те çав!

— Шăлна ан йĕрха есĕ, ӆорт. Ĕлĕкхи йăлапа епĕ, астумасăр каласа йатăм. Турă вăл мана 36 çул ыйтса та нимĕн пулăшмарĕ. Ĕненместĕп епĕ ăна халӆ.

— Ху асăнатăн вĕт çапах....

— Ӆарăн тенĕ сана.

Савăнăçлă саланӆĕç вăл кунхине пухуран. Илле калани тĕрĕс пулӆĕ, акана тухма икĕ ерне йулсан тухнă

ҫленсенҫен ултташӗ тепӗр хут пырса ҫыранҫӗҫ. Пиллӗкӗшӗн лашисем пур, пӗри ҫеҫ лашасӑр.

Ҫапла ӗнтӗ, ҫуркунне колхос 53 ҫемйене ҫитрӗ, 26 лаша, 15 плук, кайран тата 4 плук районтан кӗтмелле паҫӗҫ, 19 пулҫӗ.

Апрел уйӑхӗнҫе пӗр уйар кун лашасене кӳлсе тӑратрӗҫ те, кулаксене ерлентерме пӗр хӗрлӗ йалав ҫакса ҫуракине тухса кайрӗҫ «Ирӗклӗх» колхос ҫленӗсем.

— Вӑт кур ӗнтӗ вӗсене—ӗнсисене хыҫаҫҫӗ колхоса ҫырӑнман хресҫенсем—вӑт кахал те вӗсене.

— Калама ирха, курӑпӑр малалла мӗн пулӗ. Ҫапӑҫса пӗтӗҫ пӗрпӗринпе—ерленсе калаҫаҫҫӗ кулаксем ҫиллине шӑнараймасӑр...

---

Уполн. Главлита В-93 Заказ № 810 Тираж 5000 экз

Книжная ф-ка Центриздата Народов СССР. Москва, Шлюзовая набережная, 10.

Хакĕ 30 пус
Цена коп.

х. — 3

СЕРГЕЙ ЯЛАВИН
Глубокая борозда
Повесть. I часть.

На чувашском языке

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СССР.
Москва, центр, Никольская, 10.